Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ÇЕНТАБЕР
16
ЕРНЕКУН
214(5027) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтерер

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ ПСК(б)П хула комитечĕпе Обком ĕçĕсенчи пысăк çитменлĕхсемпе политикăлă йанăшсене болъшевикла хăйулăхпа уçса палăртрĕ.

Чăваш парторганизаци, ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти феврал-мартри пленумĕн решенисемпе тата Сталин йулташ кăтартса панисемпе хеçпăшалланса, контрреволюцилĕ троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла фашисла бандăсене çĕмĕрсе тăкас ĕçпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ, партипе государствăн аппаратне двурушниксемпе предательсенчен чылайах тасатрĕ.

Вайлă критикăпа самокритикă никĕсĕ çинче ирттнĕ ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V мĕш конференцийĕ çакна кăтартрĕ: ПСК(б)П Обкомĕпе совет руководствинче пытанса йулнă тăшмансем ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисемпе парторганизацие тĕрĕс мар çулпа йама уса курнă. Вĕсем перестраховщиксемпе карьериссене хирĕç кĕрешнĕ пек кăтартса, парторганизацинче критикăпа самокритикăна хĕснĕ, халăх тăшманĕсене пĕтĕмпех летермеле тăвас ыйтăва кун йĕркинчен кăлартнă.

ПСК(б)П Обкомĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ Г. И. Иванов, çак хăйне хăй ытла та мăнаçа хуракан етем, пĕтĕмпех халăх тăшманĕсен влийанинче пулса, тискер тăшмансене хӳтлесе тăнă. Вăл вĕсене тăрă шыв çине кăларассишĕн болъшевикла кĕрешмен çеç мар, тата вĕсене пур майсемпе ответлă вырăнсене лартса пынă. Вăл Обкомăн тăшманла кивĕ руководствинче иккĕмĕш çекретар пулнă чухне те тăшманла руководствăна тăрă шыв çине кăларассине чăрмантарса пынă, вăл руководствăна хӳтлене. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн, Суту-илӳ халăх комиссариачĕн тата ытти комиссариатсен тăшманла руководстви çинчен чылай сигналсем пулнă пулсан та, ПСК(б)П Обкомĕ, чăн малтан, Обком çекретарĕ Иванов, çав органсенче руководствăра ларнă тăшмансене тăрă шыв çине кăларман.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ ПСК(б)П хула комитечĕн иккĕмĕш çекретарĕ Лапин йулташ тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессин çинчен тунă доклада питĕ хытă критиклесе, вăл доклада, кун йĕркинче тăракан ыйтăва тивĕçлĕ мар тесе хак пачĕ. ПСК(б)П хула комитечĕпе Обкомăн пĕррĕмĕш секретарĕ Иванов тата Обком бӳровĕ хула комитетне болъшевикла йертсе пыман пирки кăна конференцине çакăн пек доклад таратма пултарнă. Хула комитет доклачĕ сăтăрла ĕçсемшĕн, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессин начар пынăшĕн кам айăплă пулнине уçса кăтартма пултараймарĕ. Çавăнпа та вăл доклад парти организацине тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене тĕппипех пĕтерме мобилизацилемест.

ПСК(б)П Обком бӳровĕпе унăн пĕррĕмĕш çекретарĕ Г. И. Иванов тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене тивĕçлипе пĕтерес ĕçе организацилемен, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессин çинчен декларацин тунипе ирттернĕ. Обком çекретарĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессин çинчен ыйту лартнă пулсан та, вĕсем ăна ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕччĕнхи вăхăтра тупса палăртнă тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес йĕнчен кăна илсе лартнă. Анчах та тăшманла ĕçсене тăрă шыв çине кăларса пырасси, йулашки вăхăтра палăртнă тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессин çинчен вĕсем ыйту лартман. Вĕсем парти активĕпе парторганизацине тăшмансен йулашкисене йалтах пĕтерме кирлĕ пек мобилизацилемен.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин конференцийĕ ПСК(б)П Хула комитечĕн пĕррĕмĕш çекретарне Г. И. Иванова политикă йĕнчен шанчăксăр çын вырăнне хурса, ăна хула комитет членĕсен составĕнчен кăларса питех те тĕрĕс турĕ. Паллах, Г. И Иванов ПСК(б)П Обком руковсодствинче те йулма пултараймаст.

Çакăнпа пĕрлех — конференци решени ПСК(б)П Обкомĕпе хула комитет çекретарĕсемпе бӳро членĕсемшĕн те хыттăн асăрхаттарни пулать, мĕншĕн тесен, халăх тăшманĕсене кăкласа ывăтас, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕçре вĕсем те политикă йĕнчен тимсĕр пулнă.

Шупашкар хулинчи партконференци, çавăн пекех районсенчи парторганизацисен пухăвĕсем Чăваш парторганизацинче лăпланса ларас йĕрке çаплах пĕтменнине кăтартрĕç. Идиотла чир—политикăла тимсĕрлĕх çаплах тытанса тăрать. Чылай организацисенче самокритикă вăйсăр, тăшмансене çĕмĕрсе тăкас ĕç начар пырать. Партилĕ политикăла ĕçе мăна пуçланă, партилĕ политикăлă ĕçе хуçалăх ыйтăвĕсемпе çыхантарса пымаççĕ. ПСК(б)П Обкомĕпе хула комитет бӳровĕсем Сталин йулташ болъшевикла сыхăлăха вăйлатасси çинчен кăтартса панисене, ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти феврал-мартри пленумĕн тата 1938 çулти йанварти пленум решенийе болъшевикла пурнăçлассишĕн кĕрешмен.

Çак йанăша хăвăртрах пĕтерес тесен, Чăваш парторганизацинче критикăпа самокритикăна нихçанхинчен те çӳле вырăна хăпартни кирлĕ. Критикă вăйлă, никама пăхмасăр, пулмала, ун пек критикăсăр малала кайма пултараймастпăр епĕр. Болъшевикла критикăпа самокритика халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе пĕтерме, парторганизацине тĕреклетме пулăшать.

Сталин йулташ партин 15-мĕш сйесĕнче çапла каланă: „Епĕр, болъшевиксем, пĕтĕм тĕнчене критиклетпĕр пулсан, Маркс сăмаххисепе каласан—пĕлĕтсене штурмăлатпăр пулсан, вăл йе ку йулташсене лăпкă хăвармала тăвассишĕнех самокритикăран пăрăнатпăр пулсан, çакăнтан вара хамăрăн аслă ĕçсем пĕтсе ларассинчен пуçне урăх нимĕн те пулма пултарас çукки паллă мар и вара?“

Троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла бандăсен йулашкисене хирĕç кĕрешесси чарăнман, вăл, пире капиталисăм тĕнчи хупăрласа тăнă вăхăтра, чарăнма та пултараймасть. Хамăр хушăра идиотла чире—политикăла тимсĕрлĕхе хăйаррăн пĕтерсе пымала.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1938 çулти йанварти пленумĕ пур организацисемпе вĕсен руководителĕсене парти массисен политикăлă сыхăлăхне пур майсемпе вăйлатса пыма, партин пур ирĕклĕ тата ирĕксĕр тăшманĕсене те вĕçне çитиччĕнех палăртса пĕтерме хушрĕ.

Партин Сталинла Тĕп Комитечĕ çакăн пек кăтартса панă çулпа пирĕн хăйулăн, шанчăклăн пымала, вăл çул çинчен нисталла та пăрăнмала мар. Тăшмансем темле чийеле хăтлансан та, вĕсем темĕнле маскă тăхăнсан та, вĕсене пирĕн пĕр çын йулмиччен тупса палăртса пĕтермеле—çакă пулать Чăваш парторганизацин тасаран та таса ĕçĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ хупăнчĕ

Ĕнер ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ кунĕпех Чăваш партофганизацин çитĕс XIX-мĕш конференцине делегатсем вăрттăн сасăласа суйлама тăратнă кандидатурăсем çинчен сӳтсе-йавасси пычĕ.

Хупăн (вăрттăн) сасăласа конференци Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцине кайма сасăлама пултаракан правапа 55 делегат, канашлама пултаракан правăпа 10 делегат суйларĕ.

Резолюци йышăнни тата мандат комиссин отчотне çирĕплетнĕ хыççăн конференци хупăнчĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-ш конференцийĕ йышăннă резолюци

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессин çинчен Лапин йулташ докладне итлесе сӳтсе-йавнă хыççăн, ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ çакна палăртать: ПСК(б)П хула комитечĕ ПСК(б)П хула организацин IV-мĕш партконференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Конференци çапла тесе йышăнать: хула комитечĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ Г. И. Иванов хула комитечĕпе хула парторганизацине политикăпа ĕçлĕх тĕлĕшĕнчен йертсе пыма пултарайман, вăл халăхăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла т. ыт. йышши тăшманĕсене, сăтăрçăсене, шпионсене, диверсантсене палăртса пĕтерес, сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене чăн-чăнах болъшевикла пĕтерес тĕлĕшпе тăтăклăн кĕрешмен.

Конференци Г. И. Иванова политикă йĕнчен шанчăксăр çын тесе шутлать, ăна хула комитечĕн пĕррĕмĕш çекретарĕнчен, хула комитет составĕнчен тата конференци президиумĕнчен, делегатран кăларать.

Конференци М. И. Лапин йулташ тунă доклада кун йĕркинче тăракан ыйтупа килĕшӳлĕ мар, тĕрĕссипе вăл делячески доклад пулнă тесе шутлать. Унта тăшмансемпе кĕрешес ĕçри çивĕччĕн тăракан политикăлă ыйтусене сиктерсе хăварнă, çавăнпа та вăл доклад парторганизацине тăрă шыв çине кăлармасăр йулнă халăх тăшманĕсен йулашкисене хирĕç кĕрешме, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерме мобилизацилемест. Çакăн пек доклад вăл хула комитечĕн тата Обкомăн пĕррĕмĕш çекретарĕ Г. И. Иванов тата ПСК(б)П Обком бӳровĕ ПСК(б)П хула комитечĕн ĕçне болъшевикла йертсе пыман пирки пулма пултарнă.

Конференци шутлать: ПСК(б)П хула комитечĕ республикăшăн хуçалăхпа политикă йĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусем патне, сăмахран, чукунçул строительстви, çĕнĕ савăт, резинă комбиначĕн строительстви ыйтăвĕсем патне таччăн пырса тăман, çавăн пекех хулари коммуналлă çуртйĕр строительствипе благоустройствă йĕнĕпе те пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Конференци ПСК(б)П хула комитетне хула парторганизацин IV-мĕш конференцийĕ йышăннă тата хула парторганизацин V-мĕш конференцинче каланисем тăрăх конкретлă, практикăлă,—ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврал-мартри тата йанварти пленумĕсен решенийĕсемпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврал-мартри пленумĕнче Сталин йулташ хăйĕн историлĕ докладĕнче тата йулашки сăмахĕнче троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла тата ытти двурушниксемпе вĕсен тăшманла, сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессин çинчен кăтартса панисене пурнăçа кĕртме май паракан, —ĕçсем туса ирттерме хушать.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ СТАЛИН йулташ хăй йертсе пынипе чăн-чăн ăслăлăхлă, марксисла-ленинла ПСК(б)П истори учебникĕ кăларнине ырласа, конференци ПСК(б)П хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене ПСК(б)П историне çак учебник тăрăх вĕренес ĕçе халех организацилеме хушать.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ

Çентабĕрĕн 14-мĕшĕнче Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕнче Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çекретарĕ Москатăв йулташ профсойузăн типлă устав пройекчĕ çинчен тунă доклачĕ тăрăх пренисем пынă.

Тухса калакансем—устав пройектĕнче профсойуза производствăлă принциппа тума (пĕр предприйати—пĕр сойуз) палăртнине тата инженерлă-техникăлă работниксен творчествă ĕçĕсене хĕсекен инженерлă-техникăлă çекцисене пĕтермешкĕн докладчик сĕннине ырланă.

Москатăв йулташ йулашки сăмах тухса каланă.

Устав комиççин составне çĕнĕ çынсем хушса кĕртнĕ хыççăн, пленум Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Советне устав комиççин ĕçне итлеме, профсойузăн типлă устав пройектне ССР Сойузĕнчи профсойузсен X-мĕш сйесĕччен икĕ уйăх малтан пичетлесе кăларма хушнă.

(ТАСС).

Икĕ мĕлйун совет турисĕсем

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çуллахи вăхăтра темиçе пин интереслă çулçӳревсемпе екскурçисем тунă. Хура тинĕс хĕрринчи чаплă вырăнсене, совет Заполярйин хулисене, Сталин йачĕпе тăракан Шурă тинĕспе Балти каналне тата Мускав—Атăл каналне, Кавказри чи çӳлĕ тусене, истори тата революци аваллăхĕпе пуйан хуласене тата йалсене икĕ мĕлйун çынна йахăн кайса курнă.

Ĕççыннисен çулçӳревĕсемпе екскурçийĕсене 130 маршрутпа организациленĕ пулнă.

20 пин çынна йахăн хутшăннă альпинисла походсем анлăн сарăлса кайнă.

Октабĕр уйăхĕнче çĕнĕ турисла маршрут уçăлать. Туриссем Сталин йулташăн Закавказири революцилĕ ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсене курĕç. Вĕсем Баку, Тбилиси, Гори тата Батуми хулисенче пулаççĕ. Çак маршрутпа çулçӳреве кайма турисла-екскурçиле базăсем Совет Сойузĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен темиçе çĕр зайавкăсем илнĕ те ĕнтĕ.

(ТАСС).

Учебниксене вырăсларан куçарас ĕçе йĕркелеме кирлех

Чăвашсен государствă издательстви çулленех вырăсларан куçарнă учебниксем кăларать. Паллах ĕнтĕ вырăсларан чăвашла куçарнă учебниксене ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче çирĕплетеççĕ. Кунта епĕр М. П. Потомкинпа П. Г. Терехăв çырнă „Хут сахал пĕлекенсен шкулĕнче вĕренмели географи“ (1937 çул, тиражĕ 30000, иккĕмĕш издани, чăвашла куçарнине редакцилекенĕ Н. Андрейĕв) кĕнекинчи хăшпĕр кăлтăксем çинчен чарăнса тăрасшăн.

Вырăсларан чăвашла куçарас ĕçре пĕр пысăк çитменлĕх пур. Вăл: куçаракансем пĕр-пĕринпе килĕшмесĕр ĕçленĕ пирки йапала йачĕсене тата ыттине те кашни хăйне йевĕр, мĕнле шухăшлана çавăн пек куçарни, пĕр сăмахпа каласан, кĕнекесем куçарса кăларас ĕçре халиччен те çирĕп термин çукки. Акă, çӳлте асăннă учебника пăхса тухăпăр. Кунта пĕр йапаланах тĕрлĕ страницăра тĕрлĕрен куçарса пăтраштарса пĕтернĕ. Сăмахран, река сăмаха 20-мĕш страницăра „çырма“, 29-мĕш страницăра „шыв“ ытти страницăсенче „йухан шыв“ тесе куçарнă. Овраг сăмаха 27-мĕш страницăра „тип вар“, ытти страницăсенче „тип çырма“ тесе куçарнă. Кунсăр пуçне тата акă мĕн: пояс сăмаха (54 стр.), полоса сăмаха (65 стр.) тата хăшпĕр çĕрте зона сăмаха та тăрăх тесе куçарнă. Пояс полоса, зона хушшинче нимле уйрăмлăх та çук-ши вара? Облачность, небо, туча сăмахсене пĕр тĕрлĕ—„пĕлĕт“ йе „çанталăк“ тесе куçарнă: пĕр çĕрте облачность „пĕлĕт“, тепĕр çĕрте вăл „çанталăк“ пулса тăнă. Ку çеç те мар-ха: Выветривание сăмаха „ваналççĕ“, „çилпе саланаççĕ“ йе тата „йашни“, тенĕ. Ку вису сăмахĕ те выветривание йавленине нийепле те аса илтерме пултараймаççĕ. 30-мĕш страницăра горная лавина сăмаха „тусенчи лавина (йăтăну)“ тесе çырнă. Ытти учебниксенче йăтăну—сброс тенине пĕлтерет. Сброспа лавина хушшинче уйрăмлăх пурах ĕнтĕ. 25-мĕш страницăра северное сияние сăмаха „улшăну-тăвусем“, тенĕ. Вулакансем „улшăну-тăвусене“ вуланипе северное сияние çинчен пĕлейĕç-ши?

Епĕр кунта паллăрах пысăк йăнăшсем çинче чарăнса тăтăмăр. Учебникре çитменлĕхсем татах та пур. Анчах кунта кăтартнă йăнăшсем те çав учебнике çĕнĕрен йусаса кăларма кирлине уççăнах кăтартса параççĕ.

Учебниксенче çакăн пек йăнăшсем пулни чи малтанах учебниксене куçарас ĕçе тивĕçлĕ йĕркелеменнинчен, ку ĕç çине çийелтен пăхнинчĕн килет. Ку таранчен географи учебникĕсене çирĕплетнĕ терминсемсĕрех куçарнă. Çак çитменлĕхе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн хăвăртрах пĕтерме тăрăшмала.

Н. Мурайĕв.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче политикăна тата çар ĕçне вĕренесси.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. Н. Богдан лейтенант кĕçĕн командире Ç. Ф. Ситникăва тактика задачĕ парать.

Б. Фишман фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Ăмăртса вĕренетпĕр

Пирĕн Н-ски чаçри красноармейецсем комсомол XX çул тултарнине питĕ пысăк çитĕнӳпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Епĕр отделенипе отделени хушшинче социалисăмлă ăмăртăва çирĕппĕн сартăмăр. Занятисене „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренме йышăнтăмăр.

Хамăр çине илнĕ обйазательствăсене лайăх пурнăçлатпăр. Социалисăмлă ăмăрту договăрне тĕрĕслене хыççăн, аслă лейтенант Брайнин, аслă политрук Корчагин йертсе пыракан 2-мĕш подразделени малта пыни курăнчĕ.

Шикейĕв.

Мана льгота кирлĕ мар

ШĂНКĂРТАМ районĕнче призыв çентабĕрĕн 8-мĕшĕнче пуçланнă. Колхозри çамрăксем призыв комиççине хăйсен тăванĕсемпе пĕрле пынă. Призывниксен ашшĕ-амăшĕсем ачисем Хĕрлĕ Çар ретне йурăхлă пулнипе савăнаççĕ.

Валишĕв призывник комиççине кĕчĕ. Валишĕвпа пĕрле комиççине ашшĕ те кĕчĕ. Вăл 62 çула çитнĕ. Комиççи Валишĕва льгота памала турĕ. 62 çулхи старик комиççине кĕрсе çапла каларĕ: „Епĕ льготăпа усă курма килĕшместĕп, колхозра ĕçлеме пултаратăп, çавăнпа та ывăлăма Хĕрлĕ Çара илме ыйтатăп“.

Кужикăв.

Тулли хаваслăхпа

ПАТĂРЙЕЛ. (Телефон тăрăх). Кашни кунах аван лашасем кӳлнĕ лавсемпе призыв пунктне çамрăксем килсе тăраççĕ. Хуткупăс тата хаваслă йурă сасси йанăрать.

Призыв пункчĕ колхозник çуртне вырнаçнă. Ку çурт айакранах илĕртсе тăрать. Шалта тĕрлĕрен справкăсем паракан сĕтел, буфет, кĕнеке киоски пур. Унтах Хĕрлĕ Çарăн паттăр çапăçу кунĕсене кăтартса паракан фотовыставкă. Призывниксем хаçат-журнал вулаççĕ. Биллиардла выляççĕ.

Призыв 4-мĕш кун пырать. Чи малтан комиççине „Хĕрлĕ партизан“ колхоз коньухĕ Г. Е. Галкин кĕчĕ. Врачсем Галкин сывлăхне тĕплĕн тĕрĕслерĕç. Йалсовет председателĕнчен вăл мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлчĕç. Комиççи председателĕ Буркăв йулташ Галкина Хĕрлĕ Çар ретне илни çинчен пĕлтерчĕ. Колхозри çамрăк коньух тулли кăмăлпа хаваслачĕ. Ун хыççăн комиççине Муштаковпа Лукойанăв йулташсем кĕчĕç. Врачсем сывлăха тĕрĕслене хыççăн: Сире çара илес тетпĕр, килĕшетĕр-и?—ыйтать Буркăв йулташ.

— Килĕшетпĕр,—ответлеççĕ çамрăксем.

„Хĕрлĕ йалав“ колхозри çамрăксем нумайĕшĕ вишшер оборонă значокĕ илнĕ. Призыв комиççи умне пĕр тăвансем Байдутăв Георгипе Йакăв тухса тăчĕç. Вĕсен килĕнче ĕçлекен çук. Çапла вара вĕсенчен пĕри льгота илме тивĕçлĕ. Анчах та вĕсем льгота панипе килĕшмеççĕ, иккĕшĕ те Хĕрлĕ Çара кайасшăн. Комиççи иккĕшне те илет.

Н. Пушкин.

Пулас хĕрлĕ командир

Хĕрлĕ Çар ретне лайăх çамрăксем кайаççĕ. Комиççисенче çар ретне илекен çамрăксем—Ленинла-Сталинла комсомол пăхса ӳстернĕ çамрăксем. Комсомол вĕсене тăван çĕршыва йуратма вĕрентнĕ.

Тохмейăвăри (Шупашкар р-нĕ) Ананий Данилăв пуçламĕш шкулта вĕреннĕ чухнех активлă пионер пулнă. Кайарахпа ăна комсомол организацийĕ звено тата отрйад вожатăйĕ тунă. Вăл общĕствăла ĕçе ача чухнех питĕ йуратнă, пур ĕçре те хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Йалсовет çекретарĕнче те аван ĕçленĕ.

Халĕ вăл Чăваш АССР Суту-илӳ халăх комиссариатĕнче ĕçлет. Комсомолтан парти кандидатне куçма хатĕрленет.

Нумайах та пулмасть Данилăв Шупашкарти призыв комиççине кĕрсе тухрĕ. Комиççире ăна полк шкулĕн кандидатне илчĕç.

В. Цыпленкăв.

Украинă столицинчи призывниксем

Украинă столицинче—Кийĕвра Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн призывĕ питĕ пысăк çĕкленӳпе иртет. Призыв пунктне сăлтавсăр пĕр призывник те килмен пулман.

Çара илме йурăхлă призывниксен процентĕ пысăк. Çапла, Кировски районĕ тăрăх мĕн пур призывниксенчен 92,7 процент, Молотовски районĕ тăрăх—91,3 процент, Кагановичски районĕ тăрăх 92,7 процент çара йурăхлă пулнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтĕмпех пĕтермеле

Çентаберĕн 12—13-мĕшĕсенче Канаш районĕнчи коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси çинчен райком çекретарĕ И. А. Белоруссăв йулташăн докладне итлерĕ.

Халăх тăшманĕсем промышлĕннăçра та, йалхуçалăхĕнче те, культура строителствинче те сăтăрла ĕçсем нумай туна. Анчах çав сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн Канаш районĕнчи парторганизаци çине тăрса ĕçлеме тытăнман. Кунта тăшманла кивĕ руководствăн сăтăрла ĕçĕсем çинчен кашни пухурах калаçаççĕ, резолюцисем йышăнаççĕ. Çав вăхăтрах сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Чăн-чăн ĕçе сăмах çаппипе иртерсе йараççĕ.

Çакна районри коммунистсен пухăвĕ мĕнле иртни те лайăх çирĕплетет. Пренире 15 çын тухса калаçрĕç. Мĕн çинчен калаçрĕç ха тухса калакан йулташсем? Пурте райкомăн кивĕ руководствинчи тăшманла çынсем сăтăрла ĕçсем туни çинчен калаççĕ, вĕсене ылханаççĕ. Анчах хальхи вăхăтра сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси мĕнле пыни çинчен, парти райкомĕ çак ĕçе мĕнле йертсе пыни çинчен никам та пĕр сăмах каламарĕ. Тӳрех калас пулат, пуху райкомăн ĕçне те, Обкомăн ĕçне те нимĕн критиклемесĕр, шăппăн иртрĕ.

Прокуратурăра ĕçлекен Кузнецов йулташ та сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе хăй мĕнле ĕçлени çинчен пĕр сăмах та каламарĕ. МТС-ра ĕçлекен Кольцов йулташ „хăшпĕрисем“ чылай сăтăрла ĕçсем туна, анчах „хăшпĕр организацисемпе хăшпĕр руководителсем“ сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ тесе, пĕр конкретлă пример та илсе кăтартмарĕ. Çавăн пекех, Никăнăв (суту-илӳ организацинчен), Онучкин (чукунçул çинчи организацинчен), Йуркин (вакунсем йусакан савăтран) тата ытти йулташсем те хăйсен сăмахĕсенче парторганизаци сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен нимĕн те каламарĕç.

Парторганизаци çапла лăпкăн ĕçленĕ çĕрте ĕçсем начар пыраççĕ. Вакунсем йусакан савăт капитальнăй строителстви планне 16 процент çеç тултарнă. Кунта електростанцине хута йарас срук таксанах иртнĕ, анчах хăçан ĕçе йарассине халĕ те пĕлмеççĕ. Мунча тума тытăнни нумай пулат, вăхăчĕ иртет, мунчи çук. Хулара çăкăр лавкисем патĕнче черет, суту-илӳ организацийĕсем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ.

Тăшмансем партине çĕнĕ членсем илес ĕçе йури чарса пынă, агитацилĕ-массăлă ĕçе пĕтерсе лартнă. Депори, МТС-ри, вăрман хуçалăхĕнчи, „Авангард“ ертелĕнчи, Госбанкри, торгри, педучилишчăри организацисем иртнĕ çулта та, кăçал та çĕнĕрен парти ретне пĕр çын та илмен. Кунта комсомолецсем, партире тăман актив хушшинче ĕçлемеççĕ, партипе совет влаçĕ ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен йулташсене партине илес тĕлĕшпе тăрăшмаççĕ. Йалсенчи организацисенче те çакăн пекех.

Парти организаци политикăлă агитаци ĕçне те начар йĕркеленĕ. Суйлав кампанинче ĕçленĕ агитатăрсемпе пропагандиссенчен халĕ нумайĕшĕ ĕçлемеççĕ. Асхвара, Сиккассинче, тырпул илекен пунктра, МТС-ра политикăлă агитаци ĕçĕ сӳнсе ларнă. Çав организацисенче ĕççынисене ССР Союзĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарса памаççĕ. Çак факт райкомăн пысăк çитменлĕхĕсем çинчен калат. Анчах пухура райкомăн ĕçне критиклени пулмарĕ.

Пухура парти Обкомĕн çекретарĕ Н П. Павлăв йулташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Канашра мунча тумании çинчен, тырпул хатĕрлев планне, укçа-тенкĕ пухас плана тултарманни, партине илес ĕç начар пыни çинчен каларĕ. Çав вăхăтрах Обком руководствинчи политикăлă йăнăшĕсем çинчен нимĕн те каламарĕ. Вăл „епĕр Спасăва ес-ер пулнăшăн партирен кăлартăмăр, Розанăвăн пысăк çитменлĕхĕсем пулнă“ тесе калавипе пухăва лăплантарма тăрăшрĕ. Спасăвăн тата ыттисен тăшманла ĕçĕсем çинчен, вĕсене парти Обкомĕ курманни çинчен Павлăв йулташ пухура уççăн калама большевикла хăйулăх тупаймарĕ.

Р. Шашков.

Партине илес ĕçе вăйлатмала

Партине çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа Хĕрлĕ Чутай районĕнчи парторганизацине 31 çын хутшăннă. Пурне те парти документчĕсем панă.

Парти райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци парти кандидатне 6 çын илнĕ. Райсойуз çумĕнчи пуçламĕш парти организацинче те парти членĕсен тата кандидачĕсен йышĕ чылай ӳсрĕ. Çакна май хатĕрлев организацисенче ĕçлекен коммунистсене райсойуз организацинчен уйăрса, уйрăм пуçламĕш парторганизаци тунă. Мишеркассинче кандидатсен групи организациленĕ. Кунта уйрăмăнах, парти ретне ӳстерессишĕн ватă коммунис Сидорăв йулташ тăрăшса ĕçлет.

Парти ретне ӳстерес ĕç пур пуçламĕш организацисенче те лайăх пырат тесе калама çук-ха. Пантăк организацийĕ пĕр çынна та илмен.

Туктамăшри кандидатсен группинче пысăк стажлă кандидатсем чылай. Вĕсене парти ĕçне хутшăнтарса, парти членне куçарма хатĕрлес йĕнĕпе парторг Шихравкин йулташ нимĕн те тумасть.

Партин хăшпĕр пуçламĕш организацисем партине кĕме панă ыйтусене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци Шуньков ыйтуне пĕр уйăх ытла пăхмасăр выртарнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче 1038 комсомолец шутланат. Комсомолецсене партине илессипе ПСК(б)П райкомĕ те, комсомол райкомĕ те çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Райкомол партине кĕме 45 комсомолеца рекомендаци панă. Вĕсенчен парти райкомĕ 13 çынна анчах илнĕ-ха.

Сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлесси çине тата вĕсен йышне ӳстересси çине райкомпа пуçламĕш парторганизацисен хытăрах çаврăнса пăхмала.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче малашне парти ретне ӳстерес ĕçе вăйлатмала. Çавăнпа партире тăман актив хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе тата çӳлерех выранна çĕклемеле. Кашни коммуниса, сочувствуйушчине тата партире тăман активиса парти вĕренĕвĕн кружокĕсене хутшăнтарса, ПСК(б)П историне вĕренессине лайăх организацилемеле.

Федăрăв.
Хĕрлĕ Чутай райком инструктăрĕ.

Парти историне вĕренесси

КУСЛАВККА. Çентаберĕн 14-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Куславкка районĕнчи коммунистсен пухăвĕ хăйĕн йышăвĕнче парти историне партвĕренӳ кружокĕсенче коммунистсене, комсомолецсене, сочувствуйушчисене, учителсене, рабочисемпе колхозниксене вĕрентессине халех организацилеме хушса хăварчĕ.

Парти райкомĕ коммунистсем ăçта вĕренмелине хăйĕн заседанийĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Парти историне вĕренессипе 9 кружок ĕçлет. Кружоксене йертсе пыма руководителсем уйăрнă. Пропагандиссем кашни уйăхăн 16-мĕш числисенче Куславккана пропçеминара пухăнаççĕ. Пропçеминара йертсе пыма парткабинет пуçлăхне Руççин йулташа уйăрса хунă.

Йалти коммунистсем уйăхра 3 хут пухăнаççĕ. Вĕсем производствăлă ĕçе парахса, 6 сехет вĕренеççĕ. Халĕ парти историн кĕнеки тухаччен хаçатсемпе усă куратпăр.

Çентаберĕн 10-мĕшĕнче пĕрремĕш заньати пулса иртрĕ.

Парти вĕренĕвне вăйлатас шутпа çентаберĕн 15-мĕшĕнче парторгсен тата кружок руководителĕсен канашлăвĕ пулат.

Ун хыççăн, 17-мĕшĕнче, вулав çурчĕсен, клубсен тата хĕрлĕ кĕтес заведуйушчийĕсен канашлăвĕ пулмала.

Кăтартнă канашлусенче ПСК(б) Партин историне вĕренес ыйтăва лайăх тишкĕрсе, вăл ĕçе коммунистсемпе партире тăманнисен хушшинче анлăн сарса йама шутлатпăр.

Салмин.

Колхозри çтена хаçачĕ

ВĂРМАР. Кĕтеснерти ПСК(б) Партин 15-мĕш сйесĕ йачĕпе тăракан колхозра улттă çул хушши ĕнтĕ „Трактăр“ йатлă çтена хаçачĕ тухса тăрат.

Кăçал ку тарана çитиччен 43 номĕр тухнă. Çтена хаçачĕ çине 37 çын çырса тăрат, вĕсенчен йалан çыракансем 12 çын. Çтена хаçачĕ хăйĕн тавра колхозри чи лайăх çынсене пĕрлештерсе тăрат. Активлă йалкорсем хушшинче бригадирсем, зоотехниксем, фермă пуçлăхĕ, ветеринари фельдшерĕ, колхозниксем пур. Ответлă редактăр В. Петров йулташ, ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле çтена хаçатне кашни икĕ кунта пĕрре кăларса тăмала тума шутлат.

Б Алендейĕв.

Учителсем парти историне вĕренеççĕ

Тракри вăтам шкул çумĕнче учителсем вальли йатарласа ПСК(б)П историне вĕренмели кружок организацилерĕç. Ку кружока Тракри вăтам шкулта историне вĕрентекен учител Г. Томасăв йулташ йертсе пырат. Кружокăн малтанхи заньати çентаберĕн 6-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Учителсем заньатинче пурте пекех пулчĕç.

Ваç. Иваншков.

ПСК(б) Парти историне çĕнĕ учебник тăрăх вĕренме тытăннă

Чăваш АССР Çар Комиссариатĕнчи комсомолецсем ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ пичетленсе тухнине питех те ырлаççĕ.

— ПСК(б) Парти историне епĕ темиçе хут та вĕренме пуçăннă,—тет комсомолец Софронăв Александр,—анчах тĕплĕ учебник пулман пирки, вĕçне çитиччен вĕренсе пĕтереймен. ПСК(б) Парти историйĕн Кĕске курсĕ чăн-чăн тивĕçлĕ учебник пулса тăрат. Ăна парти Тĕп Комитечĕ çирĕплетнĕ.

Çар Комиссариатĕнчи парти историне вĕренмели кружок ку таранччен Йарославский кĕнеки тăрăх ĕçлесе пыратчĕ. ПСК(б) Парти историйĕн Кĕске курсĕ „Правда“ хаçат çинче пичетленме пуçлансанах, ун тăрăх вĕренме пуçлантăмăр. Пĕррремĕш заньати çентаберĕн 13-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Вĕренекенсем историне çăмăл чĕлхепе çырнă, ăнланма та лайăх, тесе хаклаççĕ.

Заньатисене Абаçейĕв йулташ йертсе пырат.

В. Цыпленкăв.

Парторганизацин районри пухăвĕ

КУСЛАВККА. Çентаберĕн 12-мĕшĕнче парторганизацин районри пухăвĕ пулчĕ. Пуху райпарторганизацин мал уйăхĕнче пулнă пуху йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртсе пыни çинчен парти райкомĕн докладне итлерĕ.

Парторганизаци йулашки вăхăтра пысăк ĕçсем туса иртернĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ăнăçлăн иртернĕ. Суйлав вăхăтĕнче агитаципе массăлă ĕçе сарас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçленĕ.

Йапони самурайĕсем пирĕн çĕршыв чикки çине тапăннă вăхăтра пуçламĕш парторганизацисем выранĕсенче ăнлантару ĕçне анлăн сарнă пулнă. Вăл кунсенче çамрăксенчен 40 çын ытла Хĕрлĕ Çара вăхăтчен малтан хăйсен ирĕкĕпе кайма ыйтса заявленисем панă. Льготă илме тивĕçлĕ призывниксем пĕри те льготă йышăнман. Тĕрлемесре, Варсăрта массăлă çар вăййисем туса иртернĕ. Унта колхозниксем пиге йахăн пулнă. Çак вăйăра пирĕн колхозсем—оборона крепĕçĕ пулса тăни уççăнах палăрнă.

Парторганизаци РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕррремĕш Çессийĕсен ĕçĕсем çинчен халăха ăнлантарса парас тĕлĕшпе те сахал мар ĕçленĕ. Парти райкомĕ халĕ хăйĕн агитатăрĕсене ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен колхозниксене, йединоличниксене ăнлантарса парас ĕçе мобилизациленĕ. Нумайах пулмасть çак ĕçпе райком агитатăрсен канашлăвне иртернĕ. Унта 150 агитатăр пулнă.

Парторганизацин пысăк çитменлĕхĕсенчен пĕри вăл—партилĕ-массăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пымани.

Район чылай ĕçсем тăрăх кайа йулса пырат. Халĕ те тырă акса пĕтермен. Икĕ колхоз кăна авăн çапса пĕтернĕ. Кĕрхи çĕртме тăвасси питех те йапăх. МТС йĕнĕпе кĕрхи çĕртме тăвас плана 24 процент кăна пурнăçланă. Тĕрлĕ хатĕрлевсем тăрăх та (тырпул, аш-какай, çу, т. ыт. те) район пысăк парăмра. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе район—чи кайа йулнă районсенчен пĕри.

Çакă вăл районри парторганизаци сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси пирки çине тăрсах кĕрешменнине кăтартат.

Уйрăм колхозсенче (Туканаш, Чăшлама, Сала) çаплах тăшманла ĕçсем палăраççĕ. Туканаш колхозĕнче нумай вăхăт хушши жуликла, сăтăрла çынсем ĕçленĕ. Çак çитменлĕхсемпе райçĕрĕç пайĕ кĕрешмен, кĕрешме те пултарайман. Мĕншĕн тесен райçĕрĕç пайĕнче ес-ер Бруçникăв ĕçленĕ. Ăна парти райкомĕ хальтерех кăна парти ретĕнчен кăларнă.

Бруçникăв колхоз строителствинче чылайăх сийен кӳнĕ. Вăл Йелчĕк колхозĕнчи кирпĕч производствине хуптарнă. Пилешкассинче фермăна пĕтерме тăнă.

Пухура парти райкомĕ уйрăмăнах МТСтанцине çителĕксĕр йертсе пыни палăрчĕ. МТС çулталлăк ĕç планне 64 процент çеç тултарнă. Трактăрсем час-часах ĕççĕр тăраççĕ. МТС трактористсен кадрĕсене хатĕрлемест. Трактăр пайĕсем çук. Трактăриссем, комбайнĕрсем хушшинче ĕç дисциплини йапăх.

Йалхуçалăхĕнче çеç мар, промышленнăçлă предприйатисенче те пит те пысăк çитменлĕхсем пур.

Тухса калаçакансем пурте пекех комбинат ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕç. Ку ĕнтĕ пĕре те ăнсăртран мар. Комбинат çĕршыва пит те кирлĕ, хаклă продукци парат. Анчах комбинат пысăк прорывра. Администраципе техникă тĕлĕшĕнчен руководствă çук. Продукцине комплектлă кăлармаççĕ. Брак нумай. Стаханăвĕцсемпе ĕçлемеççĕ. Рабочисен йышĕ пĕрмайах улшăнса тăрат. Вĕсене вальли кирлĕ условисем туса паман. Культурăлă-массăлă ĕçе йĕркелемен. Партилĕ-массăлă ĕç начар.

Парторганизаци рабочисен массине савăтра сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕçе мобилизацилемен. Нумайах пулмасть, комбинатра рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщисен аслă пухăвĕ пулнă. Унта стаханăвла йухăм çинчен сӳтсе-йавнă. Пуху решенине комбинат хаçатĕнче пичетлесе кăларнă. Анчах вăл постановленире сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес пирки пĕр сăмах та çук.

Партин районри пухăвĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Президиум членĕ, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. А. Волкăв йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл уйрăмăнах комбинат ĕçĕсем çинчен чылай чарăнса тăчĕ:

— Кунта Желтухин йулташ парти райкомĕн кашни ларăвĕнче пекех комбинат çинчен сӳтсе-йаватпăр, терĕ. Тăтăшах сӳтсе-йавни мар, комбината кайса партилĕ массăлă ĕçе вăйлатма пулăшни кирлĕ. Ответлă выранĕсенче ĕçлекен коммунистсен ĕçĕсене пĕрмайах тĕрĕслесе тăрас пулат. Рабочисене, стаханăвĕцсене савăтри сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕçе активлăн хутшăнтарас пулат,—терĕ вăл.

Пухура 20 çын тухса калаçрĕç. Докладчик та, пренире калаçакансем те партилĕ-массăлă ĕçсем çинчен, уйрăмăнах большевисăма вĕренес, парти ретне ӳстерес, ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене халăха ăнлантарса парас ĕçсем çинчен питех те сахал калаçрĕç.

Пухура критикăпа самокритикă çителĕклĕ пулмарĕ. Парти членĕ Йусупăв йулташ (Кармăш) пренире хăйĕн сăмахне çапла пуçларĕ:

— Камăн мĕн ырата, вăл çавăн çинчен калаçат. Епĕ те хамăн ĕçсем çинчен калаçас тетĕп,—терĕ. Пренире тухса калаканисем ыттисен те çавăн йевĕрлĕрех пулчĕç. Вĕсем те парти райкомĕн тата парти Обкомĕн ĕçĕсене критиклемерĕç.

И. АЛТЫН-БАШ.

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Совет Сойуз Геройĕ П. И. Пумпур хăйĕн суйлавçисем патĕнче

Çентаберĕн 11-мĕшĕнче Вăрнар округĕнчен суйлана ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Совет Сойуз Геройĕ Петр Иванăвич ПУМПУР йулташ Вăрнара килчĕ.

Пумпур йулташ Вăрнара çитсен чи малтанах районри парти пухăвĕнче пулчĕ. Ăна пуху тăвăллăн, чылайччен алă çупнипе кĕтсе илчĕ. Пумпур йулташа пуху президиумне суйлама сĕнӳ параççĕ. Пуху ку сĕнӳве тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ.

Пумпур йулташ Вăрнара килнĕ йатпа Вăрнарта нумай çынлă митинг пулса иртрĕ.

Пумпур йулташ митинга пухăннă халăха Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсенчи летчиксемпе техниксен йачĕпе саламлат. ССРС Верховнăй Совет депутатне суйласа пысăк шанăç хунăшăн хăйĕн суйлавçисене тав тăват. Вăл пирĕн çĕршыв никам çĕнтерейми тĕреклĕ çинчен калат. Хасан кӳлли районĕнче пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Йапони самурайĕсене çапса салатни çинчен каласан, митинг Хĕрлĕ Çара, Сталин йулташа чысласа тăвăллăн алă çупат.

* * *

Çентаберĕн 12-мĕшĕнче Пумпур йулташ хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулма колхозсем тăрăх тухса кайрĕ.

Малтанах Пумпур йулташ Мамалайри Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра пулчĕ. Ку колхозри колхозниксемпе Булатăвари Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕ Пумпур йулташа ССРС Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Колхозниксем авăн çапаççĕ. Пумпур йулташ вĕсем патĕнче итем çинче пулчĕ. Колхозниксем хăйсен депутачĕпе—Совет Сойуз Геройĕпе тĕл пулнишĕн савăнаççĕ.

— Епĕр питĕ кĕтрĕмĕр, спаçиба сире, Петр Иванч, пирĕн пата килсе курнăшăн, татах килессе кĕтетпĕр,—тет 66 çулхи ватă колхозник Оçип Иванч.

— Епĕ сиртен каçару ыйтатăп, манăн суйлав умĕн те, унтан кайран та, килме май пулмарĕ. Партипе правителствă заданине пурнăçлас пирки хытă ĕçлемеле пулчĕ. Акă халь йерçрĕм те, килтĕм. Кĕркунне, есĕр те пĕтĕмпех йĕрçсе çитсен, татах килетĕп,—тет Пумпур йулташ.

Колхоз правлени çурчĕ патĕнче Пумпур йулташ шкул ачисемпе тĕл пулат. Пумпур йулташ вĕсене лайăх вĕренсе, тăван çĕршывăн патриочĕсем пулма, хăй пек Герой пулма сĕнет.

Шкул ачисемпе тата пионерсемпе тĕл пулнă хыççăн, Пумпур йулташ колхоз хуçалăхĕпе паллашат. Йалхуçалăх машинисене йапăх тытнине палăртса, колхоз пурлăхне çирĕп сыхлама кирлине кăтартат.

* * *

Унтан Пумпур йулташ Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозра пулчĕ. Кунта сывăхри йалсенчен те халăх нумай пухăннă. Пумпур йулташ колхозри радиоузелта, типографинче пулчĕ тата колхоз хуçалăхĕпе паллашрĕ. Кунта колхозниксем чăн та пуйан тата культурăлă пурнăçпа пурăннине, ĕçе лайăх организациленине курчĕ.

Унтан клубра митинг уçăлчĕ. Халăх туллийех. П. И. Пумпур йулташ митингра тухса калана сăмахра колхозниксене 1939 çулта пулакан Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкинче тивĕçлĕ выран йышăнассишĕн халех кĕрешӳ пуçарса йама сĕнчĕ.

Колхозниксем хăйсен йуратнă депутачĕ П. И. Пумпур йулташ каланисене хаваслăн йышăнса, Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче—йалхуçалăх павильйонĕнче пĕрремĕш выран йышăнмала пулассишĕн кĕрешме пулчĕç.

* * *

П. И. Пумпур йулташ çав кунах Булатăвари Молăтăв йачĕпе тăракан колхозра, Уравăшри „Первое мая“ колхозра пулчĕ. Вăрнарти туллимар вăтам тата вăтам шкулта вĕренекенсемпе тĕл пулчĕ. Унтан МТСтанцинче, Хапăсри „Советская деревня“ колхозра пулчĕ.

Волкăв.

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, Совет Сойуз Геройĕ П. И. Пумпур Елĕкре

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, Мускав Çар округĕн Сывлăш Çар вăйĕсен начальникĕ, Совет Сойуз Геройĕ Петр Иванăвич Пумпур йулташ çентаберĕн 13-мĕшĕнче Елĕке, хăйĕн суйлавçисем патне килчĕ. П. И. Пумпур йулташ чи малтан йĕтĕн савăтĕнчи тата Мăн Вылă колхозĕнчи суйлавçăсем патĕне пулчĕ. Йĕтĕн савăтĕнчи цехсенче пăхса çаврăннă вăхăтра П. И. Пумпур рабочисемпе каларĕ.

Рабочисемпе колхозниксем П. И. Пумпур килнĕ йачĕпе митинг турĕç. Митингра Пумпур йулташ Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсенчи летчиксемпе техниксен йачĕпе саламлат, ССРС Верховнăй Совет депутатне суйласа пысăк шанчăк панăшăн тав тăват.

Пумпур йулташ йĕтĕн савăтĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн кăтартса пачĕ. Стаханăвла йухăма сарса йарасси çинчен каларĕ. Октябĕр революци 21 çул тултарнă тĕле йĕтĕн савăтне стаханăвла савăт тума тăрăшас пулат,—терĕ Пумпур йулташ.

Каçхине, 5 сехетре, Елĕкри колхозниксемпе служăщисен тата шкулта вĕренекен ачасен П. И. Пумпур килнĕ йатпа митингĕ пулчĕ. Митингра Пумпур йулташ, хăйĕн суйлавçисене саламлана хыççăн, ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессин ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Тăван çĕршыва сыхлассипе политикăлă сыхăлăха хăпартасси пирки вăйлăн ĕçлеме чĕнчĕ.

Каçхине П. И. Пумпур йулташ парти членĕсемпе кандидачĕсен пухăвĕнче Иçет-Хĕвелтухăçĕнче пулнă конфликт çинчен доклад туса пачĕ.

Елĕкри вăтам шкулти пионерсем Пумпур йулташ килнĕ йатпа концерт лартрĕç.

Çентаберĕн 14-мĕшĕнче Пумпур йулташ Йехремкасси, Хуракăш, Вырăс Сурăм колхозĕсенчи суйлавçăсем патне тухса карĕ.

П Константинăв.

Çессии решенийĕсене вĕренетпĕр

Шупашкарти строителствари рабочисем хушшинче массăлă ăнлантару ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Охранниксем хушшинче ăнлантарулă ĕçе Афанăв йулташ туса пырат. Вăл рабочисене хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа парат.

Хальхи вăхăтра ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче йышăннă саккунсене вĕренме тытăнтăмăр.

В. Димитрийĕв.

Нумайах та пулмасть Елĕк районĕн центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен служăщисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш Çессинче йышăннă саккунсем çинчен ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн президиум председателĕн заместителĕ А. М. Краснов йулташ каласа пачĕ.

В. Йефремăв.

Кĕрхи ĕçсем вĕçленеççĕ

Мăн Йавăшри (Хĕрлĕ Чутай р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз тырпулĕсене пысăк хăвăртлăхпа пуçтарса кĕчĕ. Çавăн пекех кĕске вăхăтра авăн çапса пĕтерчĕ, государствăна тырă парса татрĕ. Йалхуçалăх ертел уставĕ хушнă тăрăх фондсем тума тытăннă.

Кĕрхи тырăсене пысăк пахалăхпа акса хăварнă. 155 гектар çинче „Ватка“ суртлă ыраш, „Дюрабль“ суртлă кĕрхи тулă акнă. Кĕрхи тырăсем пĕр тикĕс шăтса тухса, лайăх й шĕрме тытăнчĕç.

Колхоз кĕрхи ĕçсене вĕçлет. Уйăра çĕрулми кăларма тытăннă. Бригадăсем пĕр пĕриппе ăмăртса кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

Çак иртнĕ кунсенче колхоз ĕç кунĕсем тăрăх колхозниксене авансла пĕрер килограм тĕштырă валеçсе пачĕ.

Ф. Семенăв.

ТЕАТР ÇЕЗОНĔ УÇĂЛАС УМĔН

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ИСКУССТВИ

Етем историйĕн тĕрлĕ тапхăрĕсем економикăн тата куљтурăн калама çук пысăк ӳсĕмĕсемпе паллă. Çапах хаљхи пек, пирĕн социалисăмла çĕршыв куљтурă фронтĕнче туса пыракан çитĕнӳсем пек, пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтава тивĕç çитĕвӳсем халиччен нихăçан та пулман, пулма та пултарайман. Мĕншĕн тесен, Аслă Октăбĕр револуцийччен искусствă експлоататăрсен аллинче тытăнса тăнă, искусствăна вĕсем харпăрлăх интересне пăхăнтарнă, капиталисăмлă влаç йĕркине çирĕплетес шутпа халăх пуçне минкретме усă курнă.

Ленин—Сталин партийĕ çеç искусствăна експлоататăрсен тыткăнĕнчен хăтарчĕ, ăна ӳсе аталанма аслă çул уçса пачĕ. Совет искусстви ĕçхалăхне куљтурăлă тата политикăлă воспитани парас ĕçре чи вăйла хĕçпăшалсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Совет искусстви хăйĕн пур йенлĕ жанрĕпе, анлă тематикипе, содержанин тарăнлăхĕпе пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтавлă вырăн йышăнма пултарчĕ. Совет Сойузĕнчи пек куљтурăна чечеклентерес, искусствăна пуйанлатас ĕçе пĕтĕм халăха мобилизацилени тĕслĕхе урăх çĕршывсенче ниçта та тупма çук. Фашисла государствăсенче куљтурăна çĕнетсе пыма мар, ăна пĕтерсе пыраççĕ, етемлĕх темиçе ĕмĕр хушши пуçтарса пынă куљтурă пуйанлăхне нимĕн хĕрхенӳсĕр çĕмĕреççĕ, искусствăн пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă аслă çыннисен ĕçĕсене вута пăрахса çунтараççĕ. Фашисăм вăл—вăрçă, буржуазин шăтса йухма пуçланă çăпанĕ; фашисăм вăл—куљтурăна, искусствăна ĕмĕтсĕррĕн хыпса çăтакан тискер кайăк, вăл—етемлĕхĕн чи ылханлă тăшманĕ. Фашисăмăн малашлăхĕ çук, унăн малашлăхĕ—вилĕм.

Пĕтĕм тĕнче историйĕ пухнă куљтурăн ăраскалĕ пирĕн çĕршывра çеç, социалисăм татăклăн çĕнтернĕ аслă çĕршывра çеç чăн-чăн чĕрĕ вăй-хăват илсе çĕршывпа пĕрлех аталанса çитĕнме, çĕршывпа пĕрлех чечекленме пултарчĕ. Чечекленчĕ çĕршыв! Чечекленчĕ унăн искусстви!

Пирĕн совет искусстви халăх интересĕпе таччăн çыхăнса тăрат̆. Мĕншĕн тесен, искусствăна халăх тăват̆, искусствăна халăх пуйанлатат̆—урăх никам та мар.

Социалисăмлă аслă çĕршыва тăванлăн пĕрлешнĕ мĕн пур халăхсен ретĕнче пирĕн чăваш халăхĕ те хăйĕн такçанхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ. Çĕнелчĕ республика, чечекленчĕ. Пурнăç условийĕсем çулсеренех лайăхланса пынă май, чăваш халăхĕ пур фронтри çитĕнӳсемпе пĕрлех искусствă фронтĕнче те çак 20 çул хушшинче нумай çĕнтерӳлĕ çитĕвӳсем турĕ.

Ĕлĕк чăваш хушшинче театр тавраш̆е пулман. Халĕ пирĕн республикăра 5 театр, актŏрсем, музыкантсем, художниксем хатĕрлекен училищăсем, халăх творчĕстви çурчĕ, районсенчи куљтурă çурчĕсем тата пĕр пине йахăн вырăнсенчи пултарулăх ушкăнĕсен кружокĕсем ĕçлеççĕ. Искусствăри професçилĕ работниксен шучĕ 400 çынна йахăн шутланат̆. Искусствă йенĕпе 250 çын тĕрлĕ шкулсенче, 20 çын—аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Пĕтĕм чăваш халăхĕ савса, йуратса тăракан музыкантсем, художниксем, йурăçăсем, сăвăçăсем, писатĕлсем сахал мар ĕнтĕ пирĕн. Вĕсен йышĕ кунçеренех ӳсет, кунсеренех çĕнĕрен çĕнĕ вăй хутшăнат̆.

Искусствă фронтĕнче йулашки çулччĕнех пытанса пурăннă халăх тăшманĕсем чи малтанах кадр хатĕрлес ĕçе калама çук сăтăрла меслетсемпе чăрмантарса пынă, театр репертуарĕсене йурăхсăр тата сийенлĕ пйесăсем кĕртсе тултарнă, хăйсене хăйсем мухтанă, мăнаçланнă, ӳсекен талантсене утăмсеренех путарса пыма хăтланнă, искусствăна халăхран уйăрма шутланă.

Искусствă работникĕсен çарĕ тĕрлĕ тăшмансенчен тата вăл ĕçе ăнсăртран лекнĕ çынсенчен тасалчĕ. Искусствăсен оргăнĕсене, театрсене йертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем, пултарулă çынсем, ĕçре тĕрĕсленнĕ, Ленин—Сталин партийĕ тата совет правитĕлстви искусствă умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçулăн пурнăçлас кăмăлпа хавхаланса тăракан çынсем хутшăнчĕç.

Пирĕн умра, искусствă фронтĕнчи ответлă работниксен умĕнче, тăракан задачсем пысăк. Вăл задачсем—искусствăра ĕçлекен пур работниксене те политикăла воспитани парасси, вĕсен маçтăрлăхĕсене ӳстересси, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене тĕпренех пĕтересси, театрсенче класçикла репертуара хаљхи совет репертуарĕпе тĕрĕссĕн çыхăнтарасси т. ыт. те. Ку задачăсене ăнăçулăн пурнăçа кĕртме пирĕн условисем пур. Вăл условисемпе тĕрĕссĕн те туллин усă курни çеç кирлĕ.

К И. Иванов.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен комитечĕн начаљникĕ.

Иккĕмĕш колхоз театрĕн ĕçĕсем

Патăрйеленчи колхоз театрĕ—çамрăк театр. Вăл мĕн пурĕ те икĕ çул ытларах çеç ĕçлет. Театр кĕске вăхăтрах куракансем умĕнче хăйĕн сăн-сăпатне кăтартма пултарчĕ. Иртнĕ çезонра вунпĕр районра пулса, 167 постановкă лартса панă. Çав постановкăсене 31.470 çын курнă.

Аçта пыран, унта колхоз театрне куракансем ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Колхозсене пырса спектакљсем лартса панăшăн колхозниксемпе колхозницăсем мухтаççĕ, партипе правитĕлствăна чĕререн тав тăваççĕ. Акă, Йелчĕк районĕнчи „Красный воин“ колхоз членĕ 55 çулхи Иван Матвейĕв мĕн çырат̆: „Епĕр ĕлĕкхи саманара хамăрăн йалта артиссене курассине аса та илмен. „Йалта“ постановкăна курса ларнă чухне манăн куççуљ шăпăртатса анчĕ. Иртнĕ ирсĕр тенче аса килчĕ. Хаљхи хаваслă йурăсене илтсен, чунăм çĕкленсе карĕ. Сталин туса панă телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешес килет. Ирĕклĕ пурнăçра тухăçлă ĕçлесе куљтурăлă канатпăр. Пĕр вĕçĕмсĕр пурăнас килет, вĕçĕмсĕр ĕçлес килет. Мĕншĕн тесен, мĕн туни пурте хамăршăн“.

Куракансем пирĕн ĕçе пысăк хисепе хурса чыслани пире тата та лайăхрах ĕçлеме, ăсталăха ӳстерме хушат̆.

Артиссем йалсенче спектакљсем лартнипе çеç чарăнса тăмаççĕ, вĕсем йала ытти йенчен те пулăшаççĕ. Суйлавсем иртнĕ вăхăтра кашни колхозра пекех суйлавçăсене суйлав положени çинчен, депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен ăнлантарса панă, çтена хаçачĕсем кăларма пулăшнă, колхозниксене хаçатсем вуласа панă. Кăçхине постановкăсем тата концертсем лартса кăтартнă.

Театр куракансен массипе тачă çыхăнса ĕçлет. Репертуара йышăнас умĕн куракансен шухăшĕсене пухатпăр, пĕрле сӳтсе-йаватпăр. Çапла майпа ĕçлени пирĕншĕн питĕ усăлă.

Театрта куљтурăлă-массăлă ĕç те йĕркелĕ пулса пырат̆. Политкружок тата театр ăсталăхне вĕренмели кружокăн занятийĕсем вăхăтра пулса пыраççĕ. Епĕр хамăрăн коллектива йалсенчи драмкружоксен членĕсемпе çирĕплетсе пыратпăр.

Театр кăçалхи çурçуллăхри финанс планне 104 процент тултарнă. Епĕр Йетĕрнери колхоз театрĕн коллективĕпе ăмăртса ĕçлетпĕр. Халĕ çĕнĕ çезонра лартма Островскин „Не было ни гроша, да вдруг алтын“, А. Дӳман—„Тропа шпиона“ тата П. Оçипăвăн „Бунт“ йатлă çĕнĕ пйесине кăтартса пама хатĕрлетпĕр.

С. К. Смирнов.

Патăрйеленчи колхоз театрĕн директăрĕ.

Чăн-чăн коммуниса кăтартасшăн

Епĕр кăçалхи çезона Н. Биртăн „Земля“ пйесине лартнипе уçатпăр. Епĕ ку постановкăра Листрат коммунис роље выљатăп.

Листрат—партипе совет правитĕлствин решенийĕсене массă хушшине сараçсишĕн тăшмансене хирĕç хастарлăн кĕрешекен коммунис. Вăл хресченсен кашни ыйтăвĕ çине тимлĕн те тăрăшулăн çавăрăнса пăхат̆. Вăл, хăй те хресченсен хушшинчен тухнăскер, хресченсен пурнăçне аван пĕлет, хресченсене совет влаçĕн тăшманĕсемпе кĕрешме пĕтĕçтерет.

Листрата епĕ, типĕ агитатăр туса мар, пултарулă коммунис, кĕрешӳ организатăрĕ, массăпа тачă çыхăнса ĕçлеме пултаракан каттăр туса кăтартасшăн. „Земля“ постановкăна куракансем сценă çинче çавăн пек пахалăхлă Листрат коммуниса курма пултараççĕ пулсан, епĕ вара хам умма лартнă задачăна пурнăçларăм, тесе калама пултаратăп.

А. Ургалкин.

Аљошкă роље выљатăп

Тăшмансемпе тата вĕсен кайашĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе актŏрсен коллективĕ тăванлăн пĕрлешсе тĕрекленчĕ, ĕçри дисциплинă йĕрки çирĕпленчĕ, пултарулă коллектив пирĕн театра чăн-чăн социалисăмла реалисăм çулĕ çине тăратассишĕн кĕрешме мĕн пур хастарлăхпа хавхаланса çĕкленчĕ.

Çитес çезона пирĕн театр „Земля“ трагедипе уçат̆. Ку трагединче епĕ Аљошкă роље выљатăп.

Аљошкă—хĕрӳ чĕрелĕ çын. Вăл Сторожĕв кулак патĕнче чылай çул хушши тарçăра пурăннă. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче хăйĕн хуçи ытамĕнчен тухаймасăр Антонăв отрйадне лекнĕ. Вăл сахал пурăнсах нумай йăнăшсем тунишĕн ӳкĕнекен çын.

Манăн задачă—çак çыннăн образне туллин те ĕнентерӳлĕн туса çитересси. Епĕ вăл образ çинче хаљ пикенсех ĕçлетĕп.

Б. А. Алексейĕв.

Чăваш Государствă Академи Театрĕн артисĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Бедность не порок“ пйесăн пĕр сцени. Академи театрен Чăваш труппи выљаса кăтартат̆.

ПИРЕН ĔÇСЕМПЕ ПАЙАНХИ ЗАДАЧСЕМ

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕ умĕнче тăракан тĕп задачă вăл—ку таранччен тунă творчĕствăлă çитĕнӳсене кăçалхи çезонра татах та вăйлатасси, тарăнлатасси пулса тăрат̆.

Паллах, чăн-чăн трибун пулас тесен, пĕр маçтăрлăх çеç çителĕксĕр. Чăн-чăн трибун пулас тесен, нумай-нумай вĕренмеле, ху пĕлнине кулленхи ĕçре кăтартса ĕнентермеле, вĕри чунпа хавхаланса тăракан художник пулмала. Унсăрăн пысăк пурнăçăн пысăк содержанине туллин те тарăнăн илсе кăтартма май çук. Пурнăçăн тарăнлăхне кăшкăрса калаçнипе çеç, çăмăллăн сиккелесе çӳренипе çеç, илемлĕ плакатсемпе çапăрлатнă постановкăсемпе çеç ĕнентерӳлĕн кăтартма пултараймастăн. Постановкăсене куракансем сценă çинчи тĕрлĕ фокуссене ĕненме таксанах пăрахнă ĕнтĕ, вĕсем тулашĕ йенчен çеç лайăх выљакан актŏрсене хисеплемеççĕ.

Çавăнпа та актŏрсене воспитани парасси, произведенин содержанине, тĕп шухăшне уçăмлăн кăтартса пама пултаракансем туса çитересси—пирĕн театрăн тĕп задачĕ пулса тăмала. Çавăн пек актŏрсем çеç театрăн авторитетне çӳлĕрен çӳлĕ çĕклеме, массă умĕнче чăн-чăн художник-агидатăрсем пулма пултараççĕ.

Никам та мар, актŏрсем çеç вĕт театрта тĕп сăн сăпат, театрăн чĕрĕ сăмахĕ, театрăн çунса йалкăшакан куçĕ, театрăн çулăмлă сасси пулса тăраççĕ. Кĕскен каласан, актŏр вăл—театр пурнăçĕн тĕп содоржанийĕ.

Çӳлте асăннă задачсене ăнăçулăн пурнăçласан, творчĕствă работникĕсен вăйлă коллективĕ, чăн-чăн реалисăмла театр тума пултаракан коллектив çуралса çитĕнесси куç умĕнчех.

Репертуара çĕнĕрен çĕнĕ пйесăсем, пайанхи пурнăç тематикипе çырнă пйесăсем, çавăн пекех, класçикла пйесăсем те кĕчĕç. М. Горькин „На дне“, А. Островскин „Бедность не порок“, Н. Островскин „Как закалялась сталь“—чăваш труппи лартнă пйесăсем театрăн историне çырăнса йулма пултараççĕ.

Пирĕн репертуар чăвашла оригиналлă пйесăсен йенĕпе питĕ те чухăн. Çĕнĕ пурнăçăн çĕнĕ çыннисене образласа паракан чăвашла пйесăсем çукпа пĕрех. Ку тĕлĕшпе чăваш драматургĕсен хăйсен мĕнпур вăйĕсене хурса ĕçлесси кирлĕрен те кирлĕ задач пулса тăмала. Пур йенчен те пиçсе çитнĕ произведенисем парас тесессĕн, драматургсен театрпа, актŏрсен коллективĕпе таччăн çыхăнмала. Драматургсемпе актŏрсен хăйсен кулленхи творчĕствăлă ĕçĕсенче пĕрне-пĕри пулăшассине манмала мар.

Е. Токмаков.

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕн художествăла руководителĕ.

Чăваш академи театрĕн репертуарĕ

Чăваш государствă акатеми театрĕн коллективĕ çĕнĕ кадрсемпе çирĕпленчĕ. Чăваш труппине Шупашкарти театр училищинчен вĕренсе тухнă артиссем—4 çын, районсенчи колхоз театрĕсенчен—4 çын хутшăннă. Кăçалхи çезонра чăваш труппи 35 çынлă коллективпа ĕçлет.

Иртнĕ çулсенче вырăс труппи пĕрер çезонлăх çеç килсе кайакан артиссенчен тытăнса тăнă. Халĕ вăл киревсĕр йăлана пăрахăçа кăларнă. Вырăс труппин иртнĕ çезонра пулнă артисĕсем йаланлăхах Чăваш академи театрĕнче ĕçлеме йулнă. Çĕнĕрен тĕп рољсене выљама ытти хуласенчен чĕнсе илнĕ артиссем ĕçлеме тытăнаççĕ. Бурмистров, Гончаров, Гейнц, Осипов, Садовскайа, Доллорес, Аленцев т. ыт. те.

Вырăс туппи кăçалхи çезонра çĕршыв чиккисене паттăрăн сыхлакан пограничниксем çинчен Погодин çырнă „Падь серебряная“, сыхлăх çинчен В. Соловйов çырнă „Семейная хроника“ пйесăна, Испанири событисем çинчен çырнă Мдиванин „Алькасар“ йатлă пйессине, çĕнĕ çынсемпе çĕнĕ çыхăнусене кăтартса паракан „Таня“ пйесăна (Арбузăвăн пйеси), граждăн вăрçи çинчен—Тренĕвĕн „Любовь Яровая“ пйесине лартса парат̆.

Иртнĕ çулхи репертуартан икĕ пйесă—Горькин „Дети солнца“ пйесăпа Рахманăвăн „Профессор Полежаев“ пйесине илнĕ, класçикла драматургин произведенийĕсенчен Островскин—„Лес“ тата „Правда хороша, а счастье лучше“ пйессисене, Грибойедăвăн—„Горе от ума“, Пушкинăн „Борис Годунов“, Молйерăн „Тартюф“ пйесине кĕртнĕ.

Чăваш труппин репертуарĕнче 8 пйесă шутланат̆: Н. Виртăн „Земля“, Н. Островскин—„Тăвăлра çуралнисем“, Оçипăвăн—„Пăлхав“, Островскин—„Гроза“, „Бедность не порок“, Горькин—„На дне“. Кусемсĕр пуçне чăваш драматургĕсем çырнă пйесăсем виççĕ пулаççĕ.

Г. В. Мордкович.

ЧГАТ директăрĕн замеçтителĕ.

Чăваш искусствин ӳсĕмĕсемшĕн

Социалисăм çĕршывĕнче искусствă историре пуçласа государствă ĕçĕнче хăйĕн пысăк вырăнне йышăнчĕ. Совет государстви аллинче искусствă ĕçхалăхне коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе калама çук вăйлă хĕçпăшал пулса тăрат̆.

Пирĕн государствă искусствă работникĕсене политикăла права, творчĕствăлă ĕç прави панисĕр пуçне, çав правасемпе усă курма, вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма кирлĕ условисене туса парат̆. 1937 çулта Совет Сойузĕнче искусствă ĕçĕсене тума 1.600 мĕлйун тенкĕ ытла уйăрса панă.

Пирĕн халăх нихçан та хаљхи пек искусствăна çывăх тăман. Совет халăхĕ искусствăна йуратат̆, искусствăн кашни ӳсĕмĕшĕн савăнат̆. Ĕççыннисен пурнăç условийĕсем лайăхланса пынă май, халăхăн куљтурлăхĕ ӳссе пынă май, искусствăн вырăнĕ çултан çул сарăлса пырат̆.

Пурнăç мĕн чухлĕ лайăхланат̆, çавăн чухлĕ çĕнĕрен çĕнĕ талантсем палăрса пыраççĕ.

Стахановĕçсем кашни çын хăйĕн ĕçĕнче артист пулма пултарнине кăтартса пачĕç. Пирĕн хĕвел пек çиçсе тăракан капăр пурнăçра çынна тӳрĕ кăмăлпа йуратмали условисем çирĕпленчĕç. Епĕр çынна паттăрлăхшăн, унăн паха ĕçĕшĕн йурататпăр. Социалисăм тапхăрĕнчи ĕç—пысăк савăнăç, ĕç—çынсен пурнăçĕпе хаваслăхĕн иксĕлми çăлкуçĕ. Хаваслă ĕç çынна йурлаттарат̆, ташлаттарат̆.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе ирĕке тухнă чăваш халăхĕ те, совет çĕршывĕн телейлĕ халăхĕсен тăван çемйинче хăйĕн ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырат̆. Ĕçре те, ĕç хыççăн та йурă-ташă кĕввисем шăранаççĕ. Ĕççыннисем тухăçлă ĕçлени хыççăн куљтурлă канаççĕ.

Хаљхи вăхăтра пирĕн Чăваш республикинчи колхозсенче, промышленнăç предприйатийĕсенче, шкулсенче пултарулăх коллективĕсемпе кружокĕсем 900-ре йахăн ĕçлеççĕ. Вĕсемсĕр пуçне уйăрăм исполнитĕлсем 2000-не йахăн шутланаççĕ. 1935 çулхипе танлаштарсан халăх хушшинчи пултарулăх кружокĕсен йышĕ икĕ хут ытла, уйăрăм исполнитĕлсен хисепĕ 23 хут ӳснĕ. Вĕсем пурте хăйсен пултарулăхне, ăсталăхне ӳстерсе пыма тăрăшаççĕ. Кĕçĕн Маклашкинă, Иванăвă, Канашри вакунсем йусакан савăт, Çĕмĕрле комбиначĕн хорĕсем республикĕпе чапа тухрĕç.

Вырăнсенчи пултарулăх кружокĕсем ĕççыннисене куљтурăла канма пулăшса калама çук пысăк ĕç тăваççĕ. Вĕсем урлă ĕççыннисем совет тата класçикла музыкă тата драмăлă произведенисемпе паллашаççĕ. Акă Канашри вакунсем йусакан савăтри хора илер. Вăл пĕр çулталăк хушшинче савăтри рабочисене валљи 27 концерт лартса панă, унсăр пуçне радиокомитет иртерекен концертсене хутшăннă, темиçе хут олимпиадăсенче пулнă. Кăçал Хусан чукунçулĕн политуправленийĕ иртернĕ олимпиадăра иккĕмĕш вырăна йышăнса, 3000 тенкĕ преми илнĕ.

Вырăнсенчи пултарулăх коллективĕсене аталантарса пымала. Вĕсене ĕçлеме лайăх условисем туса памала.

Калас пулат̆, чăваш халăх искусствине йертсе пыракан организацисен ĕçĕсем пайанхи тапхăра тивĕçлĕ пулса пыраймаççĕ-ха. Вырăнсенчи пултарулăх кружокĕсене йертсе пыракан кадрсене хатĕрлесси пирĕн республикăра питех те йапăххăн пулса пырат̆. Халăх творчĕстви çурчĕ пултарулăх кружокĕсене йертсе пыракансене хатĕрлемест.

Халăх тăшманĕсем искусствă фронтĕнче те пире пысăк сийĕн кӳрсе хăварчĕç.

Ача-пăчасен республикăри пĕр-тен-пĕр театрне çултан çулах укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен кӳрентереççĕ. Унăн хăйĕн çурчĕ çук, „çын патĕнче“ пурăнат̆. Хватерте пурăннăшăн пионерсен çуртне кашни уйăхра 600 тенкĕ тӳлемеле, анчах унăн сметинче ун пек расхутсем валљи укçа палăртман. Халĕ тата финоргăнти пуçсăр çынсем, укçа перекетлетпĕр тесе пулас, ача-пăча театрĕн штатне тата ĕç укçин фондне чакарса лартнă. Тӳррипех калас пулат̆, ку ĕçе Финанс халăх комиссариатĕнчи „ĕçлевçĕсем“ пуçпа шухăшламасăр тунă.

Ача-пăчасем валљи лартакан постановкăсем художĕства тĕлĕшĕнчен те, музыкăлă йĕркелӳ тĕлĕшĕнчен те килĕшӳлĕ пулмала. Кусене тума ача-пăча театрĕн художник те, музыкă пайĕн пуçлăхĕ те, байанист та çук.

Ача-пăча театрĕ—професçионаллă театр, ăна ачасем йurаtаççĕ, ун çине пĕр-пĕр начар ĕçлекен драмкружок çине пăхнă пек пăхни тăшманла ĕç туни пулат̆. Комсомол Чăваш Обкомĕ те ача-пăча театрĕ çине пӳрне витĕр çеç пăхни пушшех тĕлĕнтерет. Вăл ача-пăча театрĕн художĕствă руководителне пионерсен çурчĕн директăрĕ туса хунă. Ача-пăча театрне творчĕствăла ĕçлеме тивĕçлĕ условисене туса памала.

Искусствă фронтĕнче тăшмансене, сăтăрçăсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, творчĕствăлă пултарулăх сисĕнмелех çĕкленме пуçларĕ. Чăваш академи театрĕн чăваш труппи те, вырăс труппи те нумай лайăх постановкăсем лартса пачĕç. Театрăн авторитечĕ хăпарчĕ. Ку тумалли нумай ĕçсенчен пĕр пайĕ çеç-ха.

Халăх тăшманĕсем—фашисăмăн троцкисла бухаринла буржуалă-националисла йыттисем, Чăваш республикĕн искусствă управленийĕнче тата искусствă учрежденийĕсенче ларса, чăваш совет искусствин ĕçĕсене тĕрлĕ майпа чăрмантарса пынă. Вĕсем искусствă кадрĕсене ӳстерсе пырассине сийенленĕ, çамрăк работниксен творчĕствăлă шухăшĕпе пуçарăвĕсене хĕссе пынă, искусствă работникĕсем хушшинче ĕçлехлĕ пĕрлĕхе сӳрĕлтерсе йама тăрăшнă.

Чăваш искусствин ӳсĕмĕнче ĕçсем йĕркелĕ пулманни—искусствă управленин çĕнĕ руководствине ĕçе тĕпренех çĕнетсе улăштарма хушнă. Чи малтан искусствăн çамрăк кадрĕсене воспитани парас ĕçре, пултарулă кадрсене пысăкрах ĕçе куçарса пырассинче тăшмансем туса хăварнă сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă улшăнусем тумала пулнă.

Апла пулсан та, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен управленийĕ партипе правитĕлствă хушнă ĕçе тивĕçлипе туса пыман. Искусствă фронтĕнче тăшмансем туса хăварнă сийенлĕ ĕçсен йулашкисене пĕтересси çав тери йеррипен пулса пырат̆. Чăваш совет искусствин чăваш халăхĕн ӳссе пыракан ыйтăвĕсенчен нумай кайа йулса пырат̆. Çак çитменлĕхе халех пĕтермеле. Чăваш академи, ача-пăча театрĕсем валљи творчĕствă тĕлĕшĕнчен анлăн ĕçлеме кирлĕ пур условисене те туса памала.

Çак ыйтусем пурте чăваш искусствине вăйлатма кирличчен туха тăраççĕ. Çав ыйтусене татса пани чăваш искусствине авантарах ӳсме, творчĕствăлă работникĕсене ăнăçлăрах ĕçлеме пулăшат̆.

УСЛИ ВАÇЛЕНĔ.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче (Центрти Китайра) Жуйчан çектăрĕнче халĕ те хайар çапăçусем пулса пыраççĕ. Йапонĕцсен пысăк çухатусем пулаççĕ.

Иулашки вăхăтра йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе час-часах уса кураççĕ. Çеҥтаберĕн 12-мĕшĕнче йапонĕцсем, çар карапĕсем çинчен артиллерирен персе тăна хӳтлĕхпе тата сиенлĕ газ тĕтĕмĕсен хӳттипе Наҥкан районĕнче Китай позицисем çине пилĕк хутчен атакăланă. Йапонĕцсен тĕп тĕллевĕ—Сикулин йатлă высотана тытса илесси пулнă. Ун çине йапонĕцсем вунтавата хутчен атакăланă. Сывлашран бомбăсем хыттăн пăрахса тата газсемпе пысăккăн усă курса вăрçнипе кăна йапонĕцсем çав высотана йышанма пултарнă.

Çеҥтаберĕн 12-мĕшĕнче Йапони самоҷочĕсем Сиҥйан хули çине (Хаҥкоуран çурçĕреле), халăхсем йышлăн пурăнакан кварталсем çине бомбăсем пăрахнă. 350 çурта ишĕлтерсе антарнă. Хулари халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем пулнă.

Çурçĕр Китайра çеҥтаберĕн 12-мĕшĕнче Йапони самоҷочĕсем Чженчжоу çине бомбăсем пăрахнă. Хула çине 100 бомбă ытла пăрахнă. Тарса пынисен темиçе лагерне çемерсе тăкнă. Вут тивретсе йаракан бомбăсем пăрахнипе хулара пушар пулнă.

Испанири фронтсенче

Çеҥтаберĕн 13-мĕшĕнче пăлхавçăсен чаçĕсем, авиаципе артиллери пулăшнипе, республиканĕцсен Партид де Фанхунас патĕнчи (хĕвелтухăçри фронт) позицийĕсене атакăланă. Йăвăр çухатусем туса фашиссем пĕр высотана йышăннă. Ытти позицисенчен вĕсене сирсе йанă. Республиканĕцсен артиллерийĕ лайăх пеннипе Италин 20 танкне ĕçе кĕме чăрмантарнă. Виçĕ танка стройран кăларнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Испани Марокинчи лару-тăру

Франко генерал фашисла çĕршывсем пулăшнипе пуçласа йанă вăрçă Испани Мароккинче халăха пит нумай сийен кӳнĕ. Ĕçлеме пултаракан мĕн пур арçынсене Испанири пăлхавçăсен çарне мобилизациленĕ. 1937 çулти йанвар уйăхĕнче Франко генерал çаренче мароккавĕцсем 51 пин çын пулнă, 1938 çулти йанвар тĕлне çарă мобилизаципе пынă марокканĕцсен хисепĕ 135 пин çын таран ӳснĕ. Испани Мароккинче 800 пин çын пурăнаҭ. Çапла вара, Марокко халăхĕнчен 15 процентĕ—хĕçпăшал тытса вăрçăра çапăçаҭ.

Арçынсене массăлăн мобилизациленипе Марокко йалĕсенче старриксем, хĕрарăмсем тата 15 çула çитмен ачасем çеç тарса йулнă. Иаллуçалăхĕ йапăхланса кайнă. Салтаксен çемйисем выçăла аптăраççĕ.

(ТАСС).

Государствăран пособи илеççĕ

ÇĔРПУ. Анатри Кипекçе йалĕнчи „Ĕмет" колхозра 6 колхозницă нумай ачаллисен шучĕпе государствăран ик-шер пин тенке пособи илчĕç.

В. Дмитрийĕв.

ТУРХАН. Ишлейри Марийа Васильева колхозницăн 8 ача. Вăл икĕ пĕчĕк ачишĕн государствăран 4 пин тенкĕ укçа илчĕ.

П. Лазарĕв.

Чехословакири лару-тăру

Судет облаçĕнчен илнĕ йулашки сведенисем тăрăх, полиципе çар чаçĕсем фашисла пăлхава пĕтерсе лартса, икĕ хуласемсĕр—Швадербах тата Габерсбирк хулисемсĕр пуçне пур çĕрте те йĕркелĕх кӳнĕ. Швадербах хулинче генлейнăвĕцсен хĕçпăшаллă бандисем жандарм управленине, почтă çуртне, телеграфа тата ытти учрежденисене те хăйсен аллине тытса илнĕ, хула управленин çурчĕ çине свастикă паллине ӳкернĕ фашисла йалав çакнă, „автономи" туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Чехословаки çарĕн регуҷарлă чаçĕсем хулана хупăрласа илнĕ.

Габерсбирик хулинче те çакăн пек лару-тăру пулса тăнă. Хулана тытса илнĕ чухне генлейнăвĕцсем тăватă жандарма вĕлернĕ.

Иун такас мар тата Германи чиккине пăсмала ан пултăр (апла тусан Германи çийĕнчех вăрçăпа пырса кĕнĕ пулĕччĕ) тесе, икĕ пункта та хупăрласа тăракан чаçсен командованийĕ пăлхавçăсем парăнччăр тесе, вĕсем умне уҷтиматум таратнă. Уҷтиматума пурнăçа кĕртмесен çар чаçĕсем пăлхава пугарса лартма тытăнĕç,—тесе пĕлтерне.

Судет облаçĕнчи районсенче пăлхава пугарса лартнă чухне хĕçпăшаллă выступлени тума генлейнăвĕцсем малтанах тĕллĕн хатĕрленнине кăтартса паракан документсене тупнă. Малтанхах хатĕрленĕ план тăрăх çеҥтаберĕн 13-мĕшĕнче генлейнăвĕцсем пур çĕрте те выступленисем тумала пулнă.

Генлейн правиҭĕлствăпа калаçусем тума чарăнни çинчен официаллăн каласа пĕлтерне. Генлейнăвĕцсене йертсе пыраканĕсенчен чылай йăшĕ Прагă хулинчен тухса кайнă вĕсем Хеб хулине куçнă. Прагăра генлейнăвĕцсен хаçат-журналсем тухма пăрахнă. Генлейнăвĕцсен организацисен чылай пурлăхне Прагăран Хеб хулине илсе кайнă. Çак вăхăтченех Чехословакире пурăннă Германи çыннисенчен нумайĕшĕ Германине тухса кайнă. Çавăн пекех пăлхава хутшăннă генлейнăвĕцсенчен нумайĕшĕ Германине тухса кайнă.

Чехословаки правиҭĕлстви „уйрăм судсем" çинчен йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме тытăннă. Вăл судсен аллине государствăна хирĕç тăракан çынсене тытса параççĕ. Çеҥтаберĕн 14-мĕшĕнчен тытăнса çав судсем ĕçлеме пуçланă та ĕнте.

Чехословакири коммунисла партин Тĕп Комитечĕ Судет облаçĕнчи ĕççыннисем патне воззвани йанă. Воззванире правиҭĕлствă туса пыракан ĕçсене хӳтлеме тата йĕркене пăхăнма ыйтнă. Çакăнпа пĕрлех Тепком Судет нимĕç халăхĕсене тĕнчери çĕнĕ вăрçăн провокаторĕсене отпор пама тата мир хӳтлессишĕн кĕрешме чĕннĕ.

Çеҥтаберĕн 13-мĕшĕнче Оломоуц хулинче (Моравинчи промышлĕнăçла центр) фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем хăвалă демонстраци организациленĕ. Демонстрацире 35 пин çын пулнă. Судет облаçĕнче йĕркелĕх тăвас тĕлĕшпе правиҭĕлствă тăвакан ĕçсем çинчен пĕлтернине демонстрацире пулнисем оваци туса кĕтсе илнĕ. Республикăшăн тĕрĕс тăма тупа тунине вуласа панă хыççăн, 35 пин çын алли çӳлеле çĕкленнĕ.

(ТАСС).

Гитлĕр Чехословаки çине тапăнма хатĕрленессине вăйлатаҭ

Англи хаçачĕсен корреспонденчĕсем Судет облаçĕнчи районсенче пулнă. Çентаберен 12-мешпе 13-мĕшĕнче унта генлейнăвĕцсен хĕçпăшаллă выступленийĕ пулнă. Корреспондентсем хăйсен пĕлтерĕвĕсенче çав выступленисем организацилĕн пулни çинчен палăртаççĕ.

Генлейнăвĕцсем вăл выступленисене, Австрири пекех, Германи Чехословаки çине пырса кĕме сăлтав тăвас тĕллевпе тунă. Германи фашисĕсен Ҥурнбергри „сиесĕнче" Гитлĕр каланă сăмах генлейнăвĕцсем Судет облаçĕнчи пур районсенче те выступлени тăвассине пĕлтерекен сигнал пулнă.

Англин „Дейли Миррор" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи Прагă çине сисмен хушăран пырса татăклăн тапанас шутпа, Чехословаки çывăхне 1 500 самоҷот илсе пырса тултарнă. Германин Плауен, Лейпциг, Хемниц тата Дрезден хулисенчи авиаци базисенче çĕршер самоҷотсем тата горючий пысăк запасĕсем тăраççĕ.

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германирен гестапо агĕнчĕсене вунă пин çынна йахăн Чехословакине йанă, вĕсем штатски формăпа тумланнă. Чехословакире,—тесе çыраççĕ хаçатсем,—пысăк инцидентсем пулса иртрĕç, унтан та пысăк инцидентсем тума хатĕрлесçĕ пулмала.

(ТАСС).

Тырăсене вырса пуçтарни тата кĕрхи тырăсене акни

Çеҥтаберĕн 10-мĕшне Совет Сойузĕ тăрăх 78.970 пин гектар тыра вырнă—плана 90 процент тултарнă. Колхозсем плана 91 процент, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем —81 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем —88 процент, Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем 98 процент тултарнă.

Çав вăхăт тĕлнех колхозсемпе совхозсем 21.882 пин гектар кĕрхи тырă акнă—плана 61 процент тултарнă. Кĕрхи çĕртме 6 513 пин гектар çинче тунă—çакă вăл пĕлтĕр çав вăхăт тĕлне кĕрхи çĕртме тунинчен 2.200 пин гектар ытла пулаҭ.

(ТАСС).

Каучук тумали ӳсен-тăрансем

Пирĕн çĕршывра каучук тумали ӳсен-тăрансен куҷтурине лартса ӳстерес ĕç анаçлăн пыраҭ. Сăнавсем тăвас шутпа ӳстерессинчен совхозсемпе колхозсем каучук тумали ӳсен-тăрансене массăллăн акасси патне куçса пыраççĕ. Çак çулта Украинари, Воронĕжри, Курскри тата центрти ытти облаçсенчи колхозсем 13 пин гектар çинче кок-сагыз акнă. Килес çулта кок сагыз акмали çĕр лаптăкĕ 21 пин гектар таран ӳсмеле.

Каучук паракан тау-сагыз йатлă ӳсен-тăран питĕ те хаклă йапала. Çав ӳсен-тăранăн виçĕ çулхи тымарĕсенче 23—30 процент каучук пур, пахалăх йенчен вăл йут çĕршывсенчи чăн-чан каучукăн чи лайăх сурчĕсенчен кайа мар. Тау-сагыза тăватă совхозра ӳстереççĕ: Казахстанра, Украинăра та Ростов облаçĕнче. Çитес çултан пуçласа тау-сагыза Украинари тата Казахстанри хашпĕр колхозсем ӳстерме пуçлаççĕ.

Вĕсенчен чăн-чăн совет каучукĕ тăвакан 4 савăт тума паларт-нă. Икĕ савăтне 1939 çулта çулла туса çитерсе ĕçе йамала.

(ТАСС).

Канаш—Шупашкар чукунçул строитĕлствинчи стаханăвла çирĕмкунлăх

Виççĕмĕш кун

(Строитĕлствă управленийĕн сводки тăрăх)

Çеҥтаберĕн 13-мĕшĕнче строитĕлствара малтанхи кунхинчен 532 çын ытларах, пĕтĕмпе 2303 çын ĕçленĕ. Уйрăмăн илсен Шупашкар районĕнчен 379 çын, 97 лаша, Трак районĕнчен 172 çын, 30 лаша, Ишлей районĕнчен 193 çын, Канаш районĕнчен 171 çын, 39 лаша, Çĕрпӳ районĕнчен 347 çын, 53 лаша ĕçленĕ.

Ĕçлекенсен хисепĕ ӳснĕ пулин те, строителствă планне тултарасси малтанхи кунсĕнчи пекех йерипен пыраҭ. Çеҥтаберен 13-мешенче теп ĕççене 28 500 тенкелĕх тунă. Çеҥтаберен 11-мĕшĕнчипе танлаштарсан, 300 тенкелĕх кăна ытларах тунă. Уйрăмăнах лини çине хăйăр сарасси йулса пыраҭ. Кулленех 244 вакун хăйăр сармала пулсан, çеҥтаберен 11-мешенче 31 вакун кăна сарнă. Çеҥтаберĕн 12—13-мĕшĕсенче екскаваторăр ĕçлем н пирки хăйăр турттарас ĕçе пачах та туман.

Чукунçул строитĕлствинче ĕçлеме пыракансен хисепĕ ӳсеҭ. Анчах ĕç вăйне организацилесси тĕлĕшпе лапланса ларни пулмала мар. Райĕçтăвкомсемпе парти райкомĕсен строитĕлствара куллен 4000 çынран кайа мар ĕçлемеле тăвассишĕн кĕрешмеле.

Стаханăвла çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕсенчех ĕçе организацилес тĕлĕшпе начар ĕçлени курăнчĕ. Чукунçул строитĕлствин руководителĕсен, строитĕлствари организацисен пур майсемпе те ĕçлеме пыракан колхозниксене лайăх йышăнса илсе, вĕсене тĕрĕс организацилемеле. Ĕçе лайăх организацилесен, стаханăвла йухăма массăлă йухăм туса хурсан çеç çирĕмкунлăх пысăк ӳсемсем тума май пураҭ.

Музыкă инструменчĕсен маçтăрĕсем

Халăх пултарулăхĕн Н. К. Крупскайа йачĕпе тăракан Пĕтĕм Сойузри çурчĕ (Мускав) кăçалхи ийунӈ уйăхĕнче чи лайăх балалайкăсемпе домрăсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе пĕтĕм Сойузĕпе конкурс пуçласа йачĕ. Çак конкурс музыкă инструменчĕсем тăвакан пултарула маçтăрсене палăртма, халăх хушшинчи музыкă инструменчĕсен пахалăхне лайăхлатма пулăшмала.

Вăл конкурса пирĕн Чăваш республикĕнчен халăх инструменчĕсен чи лайăх маçтăрĕсем—пĕр тăван Матвейла Петр Филиппăвсем те хутшăнчĕç (Шупашкăр районĕнчи Оҷтикасси йалĕ). Вĕсем чи аван материалтан пĕрер балалайкăпа домрă туса хатĕрлĕнĕ, çийелтен пăхма та, йанăрас йенчен илсен те вăл балалайкăпа домрă хапрăксавăтсенче туса кăларнă халăх инструменчĕсенчен пĕртте кайра тămаççĕ.

Çеҥтаберĕн 25 мĕшĕнче Филиппăвсем хăйсен ĕçне музыкă маçтарĕсен маçтерскойĕсемпе предприйатисен Пĕтĕм Сойузри конкурсне Мускава йăраççĕ. Конкурс кăçалхи октаберĕн 15 мĕшĕнче пулса иртет.

Ф. Ландышĕв.

Кашкăрсем

ВĂРНАР. Районра кашкăрсемпе çине тăрса кĕрешни çук. Çеҥтаберĕн 9-мĕшĕнче Йĕрмошкă йалне кашкăрсем пырса кĕнĕ.

Вĕсем В. Абрамăвпа М. Титов колхозниксенне икĕ пăру тытса çинĕ.

А. Владимирăв.

Стаханăвла йухăма вăйлатнипе

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). „Болҷшевик" савăт, рабочисем хушшинче социалисĕмлă ăмăртупа стаханăвла йухăм сарăлса пынă май, плана уйăхран уйăха ытлашшипех тултарса пыраҭ. Савăт 8 уйăх планне хисеп йенĕпе 102,6 процент, пахалăх йенĕпе 102,9 процент тултарчĕ.

Пайанхи куна савăтра ĕçлекенсенчен 75 процентĕ стаханăвĕцсемпе ударниксем шутланса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче икшер нормă ытла тултарса ĕçлекенсем сахал мар. Зӳлайĕв, Николайĕв, Грачов йулташсем нормăна йаланах 200 процент тултараççĕ. Екстракт йухтарнă çĕрте ĕçлекен Дубровинă йулташ икĕ аппаратпа пĕччен ĕçлесе ĕлкерет. Елекрех ку аппаратсемпе икĕ çын ĕçленĕ. Иакăвлевă, Горбунов, Федăрав йулташсем те екстракт пĕçерессипе нормăна 150 процент таран тултараççĕ.

Рабочи стаханăвĕцсене йаланах ӳссе пыма партипе профсойуз организацисем тата дирекци пысăк пулăшу пăраççĕ. Пушă вăхăта куҷтурăлă ирттерме пур майсене те туса панă. Рабочисем тĕрлĕрен техникла тата политикăла кружоксене вĕренме çӳресе, пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ.

Çак йулашки çул хушшинче савăтра чылай стаханăвĕцсене ответлă вырăнсене ĕçлеме куçарнă. Самойленко, Çидăрăв, Крымăв, Коҥухов, Йенгалычĕв йулташсем халҷхи вăхăтра цех начаҷникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçри опычĕсем çинчен рабочисене каласа кăтартаççĕ, пур ĕçе те çирĕп графикпа план тăрăх туса параççĕ. Производствăлă-техниклă канашлусем туса ирттерни лайăх опытсене сарма май параҭ. Çаксене пула ĕнтĕ савăтра авари пулассине пачах пĕтерне.

Екстракт пахалăхне лайăхлатассишĕн уйрăмăнах савăтри аслă инженер Левинсон йулташ пысăк тимлĕхпе ĕçлет. Вăл хăйĕн пĕлĕвĕпе опытне пĕтĕмпех çак ĕç çине хураҭ, çĕнĕ кадрсем хатĕрлет, инженерла-техникла работниксемпе таччан çыхăнса ĕçлет.

Н. Иваницкий.

Районри хаçатсем тăрăх

● Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Аннă Кириллăвнă Лебĕдĕвă йулташа партин Кувакинă райкомĕ парти кандидатне илнĕ. Парти райкомĕ Лебĕдĕвă йулташа парти кандидатне илме йышăннă постановленине парти Обкомĕ çирĕплетнĕ.

(„Колхозная правда").

● ССРС Çулйĕр Халăх Комиссарĕн Л. М. Каганович йулташăн Канаш—Шупашкар чукунçулне октаберĕн 1-мĕш тĕлне вăхăтлăх експлоатацине парасси çинчен кăларнă приказне вуласан, Çĕнĕ Тăрмăшри (Тăвай р.) „Мартăн 8-мĕш" колхозри комсомолĕцсем пысăк хастарлăхпа чукунçул çине ĕçлеме кайрĕç. Комсорг И. Васильев йулташ чукунçул çине пуринчен малтан ĕçлеме кайнă. Кунти организацинчен чукунçул çине 8 комсомолĕц тата чылай çамрăксем кайасçĕ.

(„Болҷшевикла колхозшăн").

● Вăта Пукашри (Сĕнтĕрвăрри р.) „Совет йалĕ" колхоз кăçал пушар пулнипе пысăк сийен курчĕ. Çунса кайнă хыççăн „Совет йалĕ" колхоза йунашар колхозсем пулăшу пачĕç. „Самоҷот" колхоз 2 комплект, „Правда" колхоз 4 комплект, Услă Пукашри колхоз 3 комплект лаша кӳлмели хатĕрсемпе урапасем парса пулăшнă. Вăрманкасри „Куҷтурă" колхоз та пĕр çĕнĕ урапа тата кӳлмели хатĕрсем панă.

(„Ударник").

Совет Сойузĕ тăрăх

● Ленинград облаçĕнчи пулă тытакан колхозсенче лаборатори çурчĕсем тăваççĕ. Вĕсем чи лайăх пулăç-стаханăвĕцсен опычĕсене сарассипе ĕçлемеле.

● Николайĕвра пионерсен дворецĕ уçалаҭ. Икĕ хутлă çуртра илемлетсе тунă 22 пӳлĕм, 400 çын вырнаçмали зал пулаҭ.

(ТАСС).

Пулни-иртнисем

Спекуҷант. Испуханри (Елĕк р.) йединоличник Никандрăв Иван Мускав, Ленинград хулисенчен шурçип илсе килсе, Тутаркас районĕнче чылай вăхăт спекуҷаци туса пурăннă. Вăл килограмне 8 тенкĕпе илнĕ шурçипе 30 тенке сутнă. Халĕ ăна милици спекуҷаци тунă çĕрте тытнă. Спекуҷант хăй айăпне йышăннă. Хăйне хупнă.

Пĕлтерӳсем

1938 çулти çеҥтаберĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарта Вăрçăлă Турасăрсен Сойузĕн Чăваш Совечĕн пленумĕ пулаҭ.

КУН ЙĔРКИ:

1. Вăрçăлă Турасăрсен Сойузĕн Тĕп Совечĕн нацилĕ республикăсемпе облаçсенчи ВТС организацисен представителĕсемпе пĕрле пулса иртнĕ канашлăвĕн итогĕсем çинчен.
2. ВТС организацисем пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленес тата ăна ирттерес ĕçре хутшăнса ĕçлесси çинчен.
3. Член укçисене пухасси çинчен—Улатăр, Канаш тата Куславкка райсовечĕсен доклачĕсем.

Профсойуз Обкомĕсем пленумра пулма хăйсен представителĕсене уйăраççĕ.

ВТС Чăваш Совечĕ.

* * *

1938 çулхи çеҥтаберĕн 17-мĕшĕнче 6 сехетре касхине хула совечĕн çуртĕнче хулари учрежденисенчи, предприйатисенчи тата организацисенчи комсодсен канашлăвĕ пухăнаҭ.

Канашлу кун йĕркинче—„ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем тата комсодсен задачисем" (Калинкина йулташ доклачĕ).

Канашлăва обйазательнă пымала.

Хула комсочĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Çамрăк моториссем

Чукунçул хĕррипе вырнаçнă рабочисен городокне касхи сăн çапрĕ. Çамрăксем лини хĕрне тухрĕç. Бригадир Макçимăв йулташ хуткупăс çинче выҷлама пуçларĕ. Çавăнтах хĕрсен ертелĕнчен пĕри ташă пуçарчĕ. Савăнçлă сасă хытă йанрама пуçларĕ май ку вырăна ваттисем те пĕр ӳркевмесĕрех пычĕç.

Ташă, йурă, купăс сасси вăйлаҥнă çемĕн вăйланса пынăн туйанаҭ. Çавăнпа-и тен Михайлăвкă йалĕнче пурăнакансем те городока пычĕç.

Цагă, Васильев, Павлăв тата Изосимăв йулташсем кĕçĕр вăйăа тухман. Вĕсем вăйă тухассине ырлия хăварса пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе малашнехи ĕмĕтсем çинчен тата ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канашпа Шупашкăр хушшинчи чукунçул строителствинче стаханăвла çирĕмкунлăх ирттерме йышăннă постановленийĕ çӳтсе-йавма йулнă.

— Чукунçула октаберĕн 1-мĕшне туса пĕтерсе експлоатацине йамала. Ку тĕлĕшпе пирĕн моторисĕсен хамăрăн участкăри ĕçе отличнă туса пырса ыттисене пример кăтартмала,—тет Изосимăв йулташ.

Моториссем пурте Изоçимăв сăмахне йышăнаççĕ. Стаханăвла çирĕмкунлăхра реҷ ăсене йĕркелĕ вырнаçтарассипе тата касса сыпас тĕлĕшпе нихçанхинчен лайăх ĕçлеме пулаççĕ.

Вĕсем малтан та лайăх ĕçленĕ. Ĕç техникине кĕске вăхăтрах алла çавăрса илнĕ май, хăйсене панă ĕçе йаланах пысăк пахалăхпа туса пынă.

— Маттур, çамрăксем,—тенĕ пурте вĕсем ĕçленине курсан.

Çамрăк моториссем пурте ку специаҷнăçа иртнĕ çулта кăна илнĕ. Унччен вĕсем йалхуçалăхĕнче ĕçленĕ. Серафим Цагă Вăрнар районĕнчи Иҥгорчина йалĕнчен, кăçал 19 çула кайрĕ. Чукунçул строитĕлствинче иртнĕ çулхи май уйăхĕнчен ĕçлет. Малтанах çĕр чавнă çĕрте, унтан грузчикре, кайарахпа хăй тĕллĕнех тракторăр пайĕсене вĕренсе тракторист помошникĕ пулнă. Çак вăхăтрах чукунçул лини тăрăх та, „Пионерка" текен машинпа çӳреме вĕреннĕ. Халĕ вăл механик пулăшшăн.

Кăçал июлӈ уйăхĕнче Цагăн паха ĕçне хакласа, ăна Кавказ тăрăх курса çӳреме путевкă панă. Ун ан таварăннă хыççăн реҷсă касна çĕрте специалисем сахал пулнă пирки моторис пулса ĕçлеме куçнă. Моторисра халҷ çеç ĕçлеме тытăннă пулсан та паха тĕслĕхсем кăтартаҭ. Реҷсă касас, шăтарас тата сыпас ĕççене вырнаçулă та пысăк пĕлӳпе тăваҭ.

Иван Павлăв, Иван Васильев йулташсем чукунçул строитĕлствине кăçалхи çура ĕçлеме килнĕ. Моторисра çак йулашки уйăхсенче çеç ĕçлеççĕ. Вĕсем те ĕç техникине лайăх вĕренсе çитрĕç. Васильев реҷсă татнă çĕрте, Павлăв реҷсăна шăтарнă çĕрте ĕçлеççĕ. Иккĕшĕ те çамрăк. Хастарлăх пысăк вĕсен. Вĕсем килес çул хăйсен специаҷнăç йенĕпе вĕренме кайас ĕмĕтпе ĕçлеççĕ.

Чукунçул строитĕлстви управленинчи руководителсем пайанхи куна çитсе кама мĕн чăрмантарнине пĕлмеççĕ. Механик Морозăв станоксене лайăх ĕçлеттерме пулăшмаҭ. Çеҥтаберĕн 6 мĕшĕнче Цагă ĕçлекен машинăн маховикне каларса илнĕ те, пĕр кун хушши простой тунă. Павлăв ĕçлекен станокăн пайĕсем кивĕ пирки пĕтĕрĕнсе ларнă. Çаксем ĕнтĕ пĕр татакăр, чăрмавсăр ĕçлессине чăрмантараççĕ, ĕçлес хастарлăха та чакараççĕ.

Çамрăк моториссем стаханăвла çирĕмкунлăхра нихçанхинчен лайăх ĕçлеме обйазателствă илнĕ. Халĕ çав обйазателствăна вĕсем анăçлăн пурнăçласа пыраççĕ, ытти рабочисене пример кăтартаççĕ.

Хар Лисан.

Чăваш АСС Республикĕнчи пулҷницăсене, амбулаторисене, консуҷтацисене, диспансĕрсене, санаторисене тата ытти сиплекен учрежденисене

ПĔЛСЕ ТĂМА

Чăвашаптекоуправлени сиплекен учрежденисенчен вĕсене 1939 çулта кирлĕ пулакан медицинă, лаборатори оборудованисем тата реактивсем тăратас майпа зайавкăсем пухма тытăннă, çавăнпа та мĕнпур сиплекен учрежденисенчен аптекоуправлени адрĕсĕпе (г. Чебоксары, Аптечная 13) çав предметсем ваҷҷи кăтартнă формăпа васкавлă ОТВЕТЛĂ ЗАЙАВКĂСЕМ йама ыйтатпăр.

1939 çул ваҷҷи ответлă зайавкă

Сиплекен учреждени йачĕ ______________

Адрĕс ______________

Йĕркелĕ № №	Предметсен йачĕсем	Тĕплĕ хисеп	Мĕн чухлĕ тăраҭ	Асăрхаттарни
1	Медицинă оборудованийĕ.			
2	Лаборатори оборудованийĕ.			
3	Реактивсем.			

Зайавкăн пĕтĕм хисепĕ ______________ тенкĕлĕх

Сиплекен учреждени (йачĕ) ______________

Çак зайавкăра кăтартнă предметсене Чăвашаптекоуправлени складĕнчен вăхăтра тӳлесе илме обйазателствă параҭ тата 1939 çулта медицинă тата лаборатори оборудованисем тăратма ыйтса панă ответлă зайавкăн уйăрăлса тăман пайĕ пулса тăракан çав обйазателствăна пурнăçа кĕртессипе çыхăннă ответлăха хăй çине илет.

Сиплекен учреждени руководителĕ (алă пусни).

Бухгалтĕр (алă пусни)

Зайавкăна çырнă кун ______________

Ку зайавкăна Чăвашаптекоуправленийе кăçалхи çеҥтаберĕн 25-мĕшĕнчен кайа мар кăтартнă формăпа тĕрлĕн çырса тăратмала.

Аптекоуправлени çакна асăрхаттараҭ: кăтартнă формăпа мар, обйазателствă памасăр тăратнă зайавкăсене пăхса тухма йышăнмаççĕ.

Зайавкăсене кăтартнă срукра тăратман сиплекен учрежденисене 1939 çулта медицинă тата лаборатори оборудованисене план тăрăх парса тăрас çĕре кĕртмеççĕ.

Чăвашаптекоуправлени.

3—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илме хакĕсем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна çыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 487

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 711, ф. 6. 58Х84 н. в.